24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮЛЬ 24 КĔÇНЕРНИКУН 172 (5887) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Ĕçре çарти пек дисциплина туса хурар

Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахра: «Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăран пĕтĕм ĕçе çав ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăлармалла» терĕ.

Пирĕн çĕршыври çулăмлă патриотсем, аслă çулпуç чĕнĕвне ответлесе, юнлă фашизма ĕмĕрлĕхех сĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне мĕн кирлĕ, çавсене йăлтах туса памалла турĕç. Хăйсен тăван çĕршывне фашистла вăрă-хурахсенчен хŭтлесе хăварма çĕкленсе тăнă пĕтĕм рабочисем, колхозниксем, интеллигенци — çамрăккисем те, ваттисем те — тăмана вăйлăн çапса çĕмĕрсе тăкмалли пĕр хăватлă çар пулса тăраççĕ.

Совет ĕççыннисем тăван çĕршыв умĕнче шантарса каланă хăйсен сăмахĕсене производствăра пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлесе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Кашни рабочи, кашни инженерно-технически работник мĕнле те пулсан тухăçлăрах ĕçлесе, ытларах тата пахарах продукци туса кăларма, харпăрхăй вырăнĕнче лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

Чăнах та, хальхи вăхăтра предприятисенче, транспортра, артельсенче кашнин чĕрине савăнтаракан мухтавлă ĕçсем пулса пыраççĕ. Нумаях пулмасть Канаш деповĕнчи Черкасовăн комплекслă бригади темиçе паровоз рекордлă срокра юсаса кăларнă. Слесарьсем Золотухин, Андреев, Абросимов, Коночкин юлташсем 20 сехет хушши, заданине пурнăçлинченех, пĕр таттисĕр ĕçленĕ.

Вунпăр, çĕршер хĕрарăмсем — çĕршывăн патриоткисем фронта тухса кайнă арçынсем вырăнĕнче ĕçлеме производствăна, машинно-тракторлă станцисене пычĕç. Пăрачкав районĕнче «Трудовик» колхоз членĕ Антонина Спирина фронта кайнă Спиридонов тракторист вырăнĕнче ĕçлет. «Восход» колхоз членĕ А. Радушина юлташ Просвирин тракторист вырăнне ĕçлеме юлнă. Ишлей машинно-тракторлă станцинче фронта кайнă трактористсем вырăнĕнче ĕçлеме Афанасьева, Казакова тата Бикусова колхозницăсем пынă. Производствăна çĕнĕрен пынă хĕрарăмсем ĕç техникине хăвăрт хăнăхса пыраççĕ, вĕсем малтанхи кунсенчех хăйсен ĕç нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеме тытăнчĕç, большевикла ĕç дисциплинин образецĕсене кăтартаççĕ.

Вăрçăн çак хăрушă кунĕсенче кашни завод, фабрика, артель, МТС, колхоз, учреждени—оборона крепоçĕ пулса тăрать, пиншер çынсем пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлесе тăшмана çĕнтермешкĕн материальнăй база туса хураççĕ.

«Пирĕн хамăран пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла... Пирĕн тылри мĕнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, суя хыпар саракансене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешессине организацилемелле» **(Сталин).**

Тăван çĕршывăн хăрушă та йывăр вăхăтра, пĕтĕм çĕршыв оборона валли ĕçленĕ вăхăтра, ĕç вăхăчĕн кашни минутне хаклама, халăхăн кашни пĕр пусне, предприятисен оборудованийĕсене, чĕртаварсене, электроэнергине перекетлеме тата вĕсене типтерлĕ тыткалама пĕлес пулать. Пирĕн ретре харампырсем, найăкăшса хахалланакан çынсем пулмалла мар. Кам та кам ĕç дисциплинине пăсать, пирĕн ретре паника сарма тата ĕçе дезорганизацилеме пăхать, — вăл совет государствин тăшманĕ, ăна вăрçă вăхăтĕнчи пĕтĕм çирĕплĕхпе ăйăпласа ответ тыттармалла.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем фронтра мĕнле хăюллăн тата паттăрăн çапăçаççĕ, тылри кашни çын харпăрхăй вырăнĕнче çавăн пек ĕçлемелле, йăваш чунлă, тимĕрлĕхлĕ пулма пăрахас пулать, мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене пăрахас пулать.

Ĕç дисциплини çак самантра нихăçанхинчен те çирĕп пулмалла. Кашни предприятире, учрежденипе организацире вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ ĕç дисциплини туса хумалла. Ĕçри дезорганизаторсене тата вĕсене ачашласа, хŭтлесе тăракансене хирĕç пĕтĕм халăхпа кĕрешсе пымалла.

Ĕç дисциплинине çирĕплетес çĕрте массăллă ăнлантару ĕçне анлăн туса пыни кирлĕ, мĕншĕн тесен вăл хальхи вăхăтра уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен агитацилĕ-массăллă ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе, рабочисемпе служащисене ĕç фронтĕнчи геройсен паттăрла ĕçĕсем, вĕсен паха опычĕсем çинчен каласа памалла, пĕтĕм рабочисен массисене фабрик-завод, предприяти, учреждени умĕнче тăракан задачăсене хăвăрт пурнăçлас ĕçе мобилизацилесе пымалла.

Революциллĕ сыхăлăха ŭстермелле. Тăшман хаяр тата сĕмĕр, нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасть, вăл пирĕн предприятисен ĕçне дезорганизацилеме, диверсиллĕ ĕçсем тума тăрăшать. Хăйĕн ирсĕр ĕмĕтне пурнăçлама вăл тыла шпионсем, диверсантсем ярать. Кашни ĕççынни социализмла харпăрлăха тата государство вăрттăнлăхне сыхлас тĕлĕппе вăйлăн кĕрешмелле.

Пирĕн çине вăрçăпа килнĕ тăшман вăйлă, ăна çĕнтерме çăмăлах мар, нумай вăй, çухатусем кирлĕ. Фашизм хăйĕн пĕтĕм хура вăйне пирĕн тăван çĕршыв çине илсе килчĕ, вăл тĕнчери ĕççыннисен пĕртен-пĕр юратнă çĕршывне — Совет çĕршывне хирĕç урса кайсах, сĕмсĕрленсех çапăçать. Анчах эпир çĕнтерŭ хамăрта пуласса шанса тăратпăр. Мĕншĕн тесен, пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет правительстви, аслă Сталин тавра хурçă пек çирĕп пĕтĕçсе, пĕр çын пек пулса отечественнăй вăрçа çĕкленсе тухрĕ Мĕншĕн тесен, пирĕн Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Авиаци вăйлă, вĕсем çĕнĕ техникăпа хĕçпăлланнă, пирĕн боецсем—тăван çĕршыва, большевиксен партине, ĕççыннисен юратнă çулпуçне аслă Сталина чĕререн парăнса тăракан çынсем, вĕсем нимĕнле хăрушлăх умĕнче те шикленсе тăмаççĕ, тăшмана хирĕç хăрушă аçа-çиçĕм пек çапăçаççĕ, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Отечественнăй вăрçа çĕкленсе тухнă икçĕр миллионлă совет халăхне, унăн Хĕрлĕ Çарне çĕнтерŭсен организаторĕ, коммунизмăн аслă маршалĕ, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕ И. В. Сталин юлташ ертсе пырать. Сталин ăçта — унта çĕнтерŭ. Совет халăхĕ, Сталин юлташ ертсе пынине, граждăн вăрçин йывăр çулĕсенче ютçĕршыв интервенчĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Сталин юлташ ертсе пынă тăрăх кĕрешсе, фашизма та çĕмĕрсе тăкăпăр.

Ĕçре пĕрлĕх, организациллĕх тата дисциплина ытларах пултăр!

Пĕтĕм этемлĕхĕн хăрушă тăшманне—фашизма хирĕç, тăван çĕршывăн, ирĕклĕхĕн кĕрешме! Парти шанса панă кашни ĕç участокĕнче тŭрĕ кăмăллă пулса, хамăран пурнăçа шеллемесĕр ĕçлер! Пĕтĕмпех оборона валли, фашизма çĕмĕрсе тăкма!

Фашистсем алхаснă ялта

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). «Хлебороб» ялхуçалăх артелĕн çунса хуралнă çуртĕрĕсем, çĕмĕрсе тăкнă двигательсен ванчăкĕсем, хресчен пŭрчĕсен ванчăкĕсем—çаксем пурте фашистсем алхасни çинчен аса илтерççĕ. З. ялĕнче гитлеровецсем мĕнпурĕ те темиçе сехет хушши çеç тытăнса тăнă, анчах та çак кĕске вăхăт хушшинче вĕсем колхозри халăх пурлăхне çаратма та, колхозниксен пŭрчĕсене çĕмĕрсе тăкма та ĕлкĕрнĕ.

...Ялсовет çурчĕ патне пыратпăр. Гитлерăн урса кайнă бандисем чи малтан ялсовет çурчĕ çине ыткăннă. Вĕсем колхоз активĕн списокĕсене, красноармеецсен семьисен списокĕсене шыранă. Анчах нимĕн те тупайман, çакăн хыççăн вăрă-хурахсем чŭречесене, алăксене çĕмĕрсе тăкнă...

Колхозниксем фашистсен тискерлĕхĕ çинчен каласа параççĕ. Артель членĕ А Приходько çапла каласа парать:

— Нимĕçсем колхоз машинисене бензин сапса çунтарса ячĕç. Ун хыççăн вĕсем çунакан шучăсене колхоз вити çине пăрахрĕç. Юрать, эпир вылăхсене пурне те аяккалла илсе кайнă ĕлкĕртĕмĕр. Нимĕçсем эпир вĕсене валли пĕр пĕрчĕ тырă та хăварманнишĕн хытă тарăхнă.

Колхозница Марня Совак фашистсем мирлĕ халăхран мĕнле мăшкăллани çинчен каласа парать. Вăрă-хурахсем ял тăрăх чупса çŭрерĕç, пŭрт алăкĕсене пăшал приклачĕсемпе çапаççĕ, коммунистсене, ялсовет депутачĕсене тупса пама ыйтаççĕ, тупса памасан вĕлересипе хăратаççĕ, тырпулсене, сĕт-çу таврашне, сало таврашне йăлтах пустарса илчĕç.

— Манăн Андрейка ывăла пĕр аспид урапа питĕ хыттăн тапрĕ, ывăл ăнран кайса тŭрех çĕре ŭкрĕ, вăл халĕ те вырăн çинче выртать.

Обер-офицер Курт Краузе сумкинче çыру тупнă. Вăл обер-офицера совет стрелокĕн пульли амантнă. Сумка ăшĕнче тупнă çырура гитлерла вăрăхурахсен сĕмсĕр ĕмĕчĕсем çинчен каланă.

«Хаклă аннем,—тесе çырнă обер-офицер,—акă эпир пуян Украинăна çитрĕмĕр, анчах пушă çеçенхирте пурăннă пек пурăнатпăр. Большевиксем куртан йăлтах турттарса илсе кайнă».

Колхозниксемпе колхозницăсем вĕсен ялне фашистсенчен тасатнăран красноармеецсене чĕререн тав тăваççĕ.

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне подполковник Степан Павлович Супруна иккĕмĕш хут „Ылттăн Çăлтăр" медальпе наградăласси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, — çакă вăл Совет Союз Геройĕн званине илме право парать,— Совет Союзĕн Геройне подполковник Степан Павлович СУПРУНА иккĕмĕш хут «ЫЛТТĂН ÇĂЛТĂР» МЕДАЛЬПЕ наградăлас, унăн бюстне бронзăран туса, Супрун çуралнă çĕршывра постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 22-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Танковăй войскăсен генерал-майорне К. А. Семенченкона Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа геройство кăтартнăшăн танковăй войскăсен генерал-майорне Кузьма Александрович **Семенченкона Совет Союз Геройĕн званине** парса, **Ленин орденĕ** тата **«Ылттăн Çăлтăр» медалĕ** парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 22-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальствующи составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа геройство кăтартнăшăн çак юлташсене **Совет Союз Геройĕн званине** парса, **Ленин орденĕ** тата **«Ылттăн Çăлтăр» медалĕ** парас:

1. Лейтенант **Анохин** Константин Ефремович,
2. Полковник **Крейзер** Яков Григорьевич,
3. Капитан **Кадученко** Иосиф Андриянович.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 22-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальствующи составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа геройство кăтартнăшăн çак юлташсене **Совет Союз Геройĕн званине** парса, **Ленин орденĕ** тата **«Ылттăн Çăлтăр» медалĕ** парас:

1. Старший сержант **Борисов** Александр Михайлович,
2. Кĕçĕн сержант **Грязнов** Александр Матвеевич,
3. Старший лейтенант **Иванов** Леонид Илларионович,
4. Кĕçĕн лейтенант **Лукьянов** Александр Михайлович,
5. Старший лейтенант **Маркуца** Павел Андреевич,
6. Капитан **Матвеев** Владимир Иванович,
7. Капитан **Михайлов** Леонид Васильевич,
8. Лейтенант **Титовка** Сергей Алексеевич,
9. Старшина **Тотмин** Николай Яковлевич.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 22-мĕш.

Хĕрлĕ Çаран начальствующи тата рядовой составне СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти июлĕн 22-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе, Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн **Ленин орденĕпе** 43 çынна, **Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** — 371 çынна, **Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе** — 334 çынна, **«За отвагу» медальпе** — 126 çынна тата **«За боевые заслуги» медальпе** — 49 çынна наградăланă. (ТАСС).

Мускав хулине сывлăшран килсе тапăннинчен сыхлас енĕпе

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ кăларнă приказ

1941 çулти июлĕн 22-мĕш. № 241. Мускав хули.

Июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле немĕçсен фашистла авиацийĕ Мускав çине шырса тапăнма хăтланчĕ.

Сывлăшра сăнаса тăрас ĕçĕн службин (ВНОС) сыхăлăхлă пулнипе, тĕттĕм çĕр пулсан та, тăшман самолечĕсене вĕсем Мускав çине вĕçсе киличчен чылай малтан курса палăртнă.

Мускав çывăхĕнче противник самолечĕсене пирĕн çĕрлехи истребительсем тата зенитнăй артиллери персе кĕтсе илнĕ. Прожектористсем лайăх ĕçленĕ. Çакна пула противникăн Мускав çине эшелонсемпе вĕçсе килекен 200 ытла самолечĕсене сапаласа янă, пĕччен самолетсем çеç столица патне вĕçсе пынă. Бомбăсем пăрахнине пула тухнă уйрăм пушарсене пожарнăй командăсем тимлĕн ĕçлесе часах сŭнтернĕ. Милици хулара лайăх йĕркелĕх тытса тăнă.

Татăклăн палăртнă тăрăх, пирĕн истребительсемпе зенитчиксем противникăнне 22 самолет персе антарнă.

Тăшман авиацийĕ тапăннине сирсе ярас ĕçре хăюллăх кăтартнăшăн тата пĕлсе ĕçленĕшĕн çаксене тав тăватăп:

1. ПВО Мускав зонинчи çĕрлехи летчик-истребительсене;
2. Артиллерист-зенитчиксене, прожектористсене, аэростатчиксене тата сывлăшра сăнаса тăрас ĕçĕн службинчи (ВНОС) мĕнпур личнăй состава;
3. Мускав хулинчи пожарнăй командăсен тата милицин личнăй составне.

Тăшман самолечĕсем Мускав çине пырса тапăннине сирсе ярас ĕçе пĕлсе организациленĕшĕн çаксене тав тăватăп:

ПВО Мускав зонин командующинне генерал-майора Громадина.

ПВО соединенийĕн командирне артиллери генерал-майорне Журавлева,

Авиаци соединенийĕн командирне полковник Климова.

Генерал-майора Громадина çак ĕçре уйрăмах палăрнисене правительство наградине илме тăратма хушас.

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти июлĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерŭ)

Июлĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Петрозаводск, Порхов, Смоленск тата Житомир енĕсенче кунĕпех вăйлăн çапăçнă. Фронтри войскăсен положенийĕнче нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

Пирĕн авиаци июлĕн 22-мĕшĕнче противникăнне 87 самолет персе антарнă. Совет авиацийĕн 14 самолет пĕтнĕ.

Каярахпа илнĕ даннăйсем тăрăх, июлĕн 21-мĕшпе 22-мĕш хушшинче çĕрле, нимĕç самолечĕсем Мускав çине массăллăн вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă чухне, нимĕçсен 22 бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă. Çĕрлехи вĕçев условийĕсенче противник çакăн пек çухату тунине питех те пысăк çухату тесе йышăнмалла. Пирĕн çĕрлехи истребительнăй авиаци çапăçнипе тата пирĕн зенитнăй орудисенчен пеннипе нимĕçсен сапаланса кайнă тата деморализациленнĕ самолечĕсем хăйсен бомбисен пысăк пайне Мускав сывăхĕнчи вăрмансене тата уйсене пăрахса хăварнă. Çар объекчĕсенчен пĕрине те, çавăн пекех хула хуçалăх объекчĕсенчен пĕрине те сиен кŭмен.

Пожарнăй командăсен работникĕсем, милици работникĕсем, çавăн пекех тата Мускаври халăх хăйсене хăйсем паттăрăн тыткаланине палăртас пулать, вĕсем уйрăм самолетсем хула çине пăрахнă зажигательнăй бомбăсене, çавăн пекех тата пуçланнă пушарсене хăвăрт сŭнтернĕ.

* * *

Н-ски кавалери полкĕ, Румынипе Германин каялла чакакан чăрсене хăваласа пырса, З. районĕнче противникăн пехота батальонне хупăрласа илнĕ те йăлтах пĕтерсе тăкнă.

* * *

Германин мотомеханизированнăй войскисен группине çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, майор Апресян ертсе пыракан танковăй батальон 350 çынна тыткăна илнĕ тата 472 мотоцикл туртса илнĕ.

* * *

Июлĕн 15-мĕшĕнче, Ситняран хĕвеланăç енчи çапăçусенче, Псковран хĕвелтухăç еннелле, нимĕç чăрсем каялла чакнă чухне, пирĕн войскăсем противникăн 52-мĕш минометнăй химически полкĕн 2-мĕш батальонĕн секретлă документчĕсемпе хими пурлăхне туртса илнĕ. Туртса илнĕ пакетсенчен пĕринче çаксем пулнă: НД—199-мĕш №-лĕ секретлă инструкци «химиллĕ снарядсемпе тата минăсемпе пересси», 1940 çулти издани, тата кăçалхи июнĕн 11-мĕшĕнче войскăсене ярса панă инструкци çумне хушса çырнă секретлă çырусем. Çак документсенче отравляющи веществосемпе пысăк масштабпа усă курмалли техника тата тактика тĕлĕшпе тĕплĕн туса хатĕрленĕ кăтартусем пур. Инструкци çумне тунă хушусенче çапла кăтартса панă: химически войскăсем «40» образецлă, 10 сантиметр калибрлă тата «Д» образецлă минометсем, çавăн пекех тата химически çĕнĕ минăсем илĕç, теннĕ.

Хĕрлĕ Çар чăрсем туртса илнĕ секретлă документсем çакна уççăн кăтартса параççĕ: «вăрçа çиçĕм пек хăвăрт» вĕçлес тактика пурпĕрех арканса каяссине курса, Германи фашизмĕ çĕнĕрен тĕлĕнмелле киревсĕр ĕç тума — отравляющи веществосемпе анлăн усă курма хатĕрленет. Германин действующи войскисен составĕнче отравляющи веществосем тĕлĕпше специальнăй химически чăрсем пур.

* * *

С. юханшывĕ урлă каçмалли переправăпа пынă çапăçусенче минометчиксем Круглов, Дьяков тата Волченков уйрăмах палăрнă. Хăйсен миномечĕсенчен тĕл персе тивретсе, вĕсем виçĕ кун хушшинче противникăн противотанковăй 2 батарейине, темиçе пулеметне тата 2 пысăк орудине стройран кăларнă.

* * *

Н-ски батальон противникăн танковăй атакине ăнăçлăн сирсе янă. Старший лейтенант Меньшиков командир пулса ертсе пыракан саперсен подразделенийĕ тăшман машинисене хирĕç çапăçнă чухне пуçаруллăх тата тавçăруллăх кăтартнă. Астан вырнаçтарса лартнă минăсемпе фашистсен 19 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Голланди çĕршывĕнче Германи военщини тискеррĕн алхасни çинчен сведенисем килеççĕ. Государство деятелĕсемпе обществăллă деятельсене пиншер çынна тĕрмесемпе концентрацилĕ лагерьсене хупса лартнă. Парламентăн мĕнпур депутачĕсене арестленĕ. Продуктсене вăрă-хурахла пуçтарса илсе Германие йăсатнă пирки Голландире продовольстви тĕлĕпше вăйлă кризис пуçланса кайнă. Халăх выçă ларать. Фашистсен репрессийĕсене хирĕç ответлесе, нимĕçсен продовольствипе боеприпассен склачĕсене вут тĕртсе çунтараççĕ, Германи войскисем куçса çŭрекен çулсене арката-арката тăкаççĕ. Нимĕçсем хĕвелтухăç фронтне яма доброволецсем пухас тĕлĕпше Голландире кампани организацилеме хăтланнă. Фашистсен ĕçĕ, кĕтнĕ пекех, арканса кайнă. Фашизмшăн юн юхтарма килĕмекен доброволецсем тупăнман. Нимĕçсем Голланди салтакĕсене вăйпа ирĕксĕрлесех «доброволецсен» отрячĕсене кĕртме хăтланнине салтакçем вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

* * *

Нимĕçсен гаражĕсене, склачĕсемпе казармисене час-часах вут тĕртсе çунтарнă пирки, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем çине час-часах хĕçпăшалсемпе тапăннă пирки Франципи оккупациллĕ властсем шикленме пуçланă. Франципи оккупациленĕ пайĕнчи хулисенче пуринче те çĕрле нимĕç салтакĕсемпе вăрттăн полици халăх хушшинче пытарнă хĕçпăшалсене шыраса çŭреççĕ. Бове хулинче çĕрле 28 француза арестлесе персе вĕлернĕ, вĕсем патĕнче пистолетсем тата пĕчĕк калибрлă винтовкăсем тупнă пулнă. Шони хулинче, пăшал усранă тесе, фашистсем Жан Шеврие служащин çемьине тискеррĕн асаплантарнă.

* * *

Фронта кайнă ашшĕсемпе тăванĕсем вырăнне тăрса, Совет Союзĕнчи çĕршер пин студентсемпе школьниксем заводсенче тата колхоз уйхирĕсенче тăрăшса ĕçлеççĕ. Краснодар хулинчи шкулсенче вĕренекен 200 ача Незамаевскинчи тĕттырăпа совхозĕнче ĕçлеççĕ. Малтанхи кунсенчен пуçласах вĕсенчен нумайĕшĕ нормăна 200—250 процент тултарса пыраççĕ. Хăшпĕр школьниксем комбайн çинче лайăх штурвальнăйсем пулса ĕçлеме тытăннă. Курск облаçĕнчи Советски районри школьниксем 11 пин гектар çине акнă тĕттырăпа культурисене çумкурăксенчен тасатнă. Калинин хулинчи студентсемпе школьниксем, 2 пин çын, торф кăлараççĕ. Ростоври машинно-строительнăй институтра вĕренекен 500 студент «Ростсельмаш» заводра станоксем патне тăнă. Уфа тата Белорецк хулисенчи икĕ пин ытла студентсем паровозсем юсакан заводра тата ытти предприятисенче ĕçлеççĕ. Ленинградри ялхуçалăх институчĕ трактористсемпе комбайнерсем хатĕрлес тĕлĕпше студентсем валли кĕске сроклă курссем организациленĕ. Институтри 200 яхăн студентсем курссенчен вĕренсе тухнă та ĕнтĕ. Андреева, Секарев, Проценко юлташсем комбайнпа та, тракторпе та отлично ĕçлеççĕ. Çамрăк патриотсем Хĕрлĕ Çăран аманнă боецсемне командирĕсемшĕн тăрăшаççĕ, госпитальсем хатĕрлеççĕ, медицина сестрисен курсĕсене ертсе пыраççĕ, больницăсенче ĕçлеççĕ. Мускаври пĕрремĕш медицина институчĕн студенчĕсем çăр валли Мускавăн пур районĕнче те медицина сестрисем хатĕрлеççĕ.

ХРОНИКА

ССР Союзĕн Совнаркомĕ Сыхăну Халăх Комиссарне **И. Т. Пересыпкин** юлташа Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартнă. (ТАСС).

Ĕççыннисен производствăри активлăхĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Кĕçĕн Кармал ялсоветне кĕрекен Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем утă çулас ĕçе планпа пăхнинчен 3 кун малтан пĕтерчĕç.

Ф. Кабаев, Г. Власов, И. Трофимов колхозниксем, куллен 0,30 гектар утă çулмалла пулнă пулсан, 0,60—0,70 гектар çулса пычĕç.

Вăрманпромхозри рабочисем Е. Кирьянов, Н. Шургунов, А. Грачев тата ытти тесем те хăйсен ĕç нормине 300 процент ытла тултарса пыраççĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх каланă сăмаха итленĕ хыççăн, МТ Станцинче ĕçлекенсем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Обязательствăна пурнăçа кĕртсе пырассишĕн халĕ пĕтĕм коллектив вăйлăн кĕрешет. Денисов, Казенов тата ытти трактористсем куллен ĕç нормине 130—140 процент тултараççĕ.

Колхозниксем государство умĕнчи парăмсене срокчен тултарса пыраççĕ. Кăçалхи поставка шучĕпе государствăна Буденный ячĕпе тăракан колхоз 20 центнер, «Красный луч»—116 центнер, «Октябрь»—25 центнер тырă панă.

Ĕççыннисен производствăри активлăхĕ ŭснипе пĕрлех, вăрçă ĕçне вĕренесси те лайăхланать. Пăлапуç Пашъел ялсоветне кĕрекен «Пионер», «Комсомолец» колхозсен членĕсем сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçсене тимлĕн вĕренеççĕ.

Ку колхозсенче нумайраххан ĕнтĕ командăсем ПВХО, стрелковăй, наблюдательнăй, çыхăну, санитари групписенчен тăраççĕ. Занятисем вăхăтра пулса пыраççĕ.

Вас. ДАВЫДОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти июлĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Петрозаводск, Порхов, Смоленск тата Житомир енĕсенче çĕрĕпех вăйлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулса иртмен.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчăсĕсене хирĕç кĕрешнĕ тата унăн аэродромĕсем çине пыра-пыра çĕмĕрнĕ. Июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци сывлăшри çапăçусенче противникăнне 39 самолет пĕтерсе тăкнă тата унăн аэродромĕсем çине пырса тапăннине чухне самолетсене çунтарса янă, миçе самолет çунса кайнине тĕплĕн палăртаççĕ. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Старший лейтенант Петрухин подразделенийĕнчи зенитчиксем тăшмана тĕл персе тивретеççĕ. Фашистла бомбардировщиксен звени чугунçул кĕперĕ çине пырса тапăннă вăхăтра Фроловпа Анферов зенитчиксем умлă-хыçлăнах виçĕ бомбардировщике персе антарнă. Тепĕр кунне, пĕлĕтлĕ çанталăкпа усă курса, противник каллех кĕпер патне вĕçсе пыма хăтланнă. Ансăртран пырса тапăннине пăхмасăрах, сержант Рожин подразделенийĕнчи зенитчиксем вăхăтра пеме пуçланă. Çак вăхăтра фашистсен 6 бомбардировщикне персе антарнă.

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Н. районĕнче капитан Жуков, хайĕн самолечĕпе вĕçсе противник вăйне разведка тунă. Пĕлĕтсем хыçне пытанса, Жуков ĕлтăн тăшман аэродромĕ патне систермесĕр пынă, унта 10 самолет ларнă. Çĕр çумминпе аялтан вĕçме пуçласа, Жуков ĕлтăн бомбăсене ăнăçлăн пăрахнă, противникăнне 10 самолетне те çунтарса çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Совет истребителĕсен капитан Селезнев ертсе пыракан группи противник тылĕнче фашистсен 9 бомбардировщикне атакăланă. Совет летчикĕсем хăюллăн пырса çаппине тăшман машинисен экипажĕсем хушшинче паника пуçланса кайнă. Нимĕç летчикĕсем бомбăсене хăйсен чăсĕсем çинех пăрахса, хĕвеланăçнелле тарнă. Тăшманăн хăюллă совет летчикĕсем персе çĕмĕрнĕ виçĕ машини, çулăм хыпса илнипе, çĕре татăлса аннă.

* * *

Лейтенант Лопатинăн ротине белофинсен икĕ роти хупăрласа илнĕ. Хăвăртах оборона организацилесе, лейтенант Лопатин белофинсем çине пеме пуçланă. Снайперсем Сидорчук, Артамонов, Коровкин, Орлов финсен 60 салтакне яхăн вĕлернĕ тата амантнă. Каçхине белофинсем атака тума пуçланă, анчах та пулеметсенчен персе атакăна сирсе янă. Çапăçу хирĕнче белофинсен татах 40 салтакран кая мар вилсе юлнă. Ирхине вăрмантан советăн икĕ танкĕ тухнă. Лейтенант Лопатин, пулăшу килнине курса, ротăна атака тума çĕкленĕ. Белофинсем, танксем хĕснине тата штыксемпе атака тунине чăтаймасăр, каялла тарнă. Красноармеецсем 32 çынна тыткăна илнĕ, темиçе пулемет, çĕре яхăн винтовка тата боеприпассем туртса илнĕ.

* * *

Пирĕн мухтавлă артиллеристсем тăшмана хирĕç хăюллăн тата пĕлсе çапăçаççĕ. Джангазиев ĕлтăн командир пулса ертсе пыракан батарея çине фашистла танксен отрячĕ тапăннă. Нимĕç танкисчĕсене сывăхах пыма май парса, артиллеристсем умранах тĕллесе пенипе фашистсен 12 танкне стройран кăларнă.

* * *

Партизансен отрячĕ çĕрле пырса тапăннипе нимĕçсем оккупациленĕ Н. ялне каялла туртса илнĕ. Нимĕçсен 40 салтакĕнчен тата 2 офицертан тăракан ял гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Ялта халăхран çаратса илнĕ тĕрлĕрен пурлăха тиесе лартнă обоза ярса тытнă, ăна Германие ăсатма хатĕрленĕ пулнă. Фашистсем çаратса тултарнă пурлăха хресченсене тавăрса панă.

* * *

Июлĕн 20-мĕшĕнче гестапо агенчĕсем Юзеф Зубрицкий ятлă рабочие тытса чарнă, вăл Варшава хĕрринчи урамсенчен пĕринче фашизма хирĕçле листовкăсем сыпăтарса çӳренĕ пулнă. Зубрицкий хирĕç тăнă тата фашистсен аллинчен вĕçерĕнсе тарма хăтланнă. Шавланине илтсе юнашар кварталсенче пурăнакансем чупса тухнă та, патриот хутне кĕме пуçланă. Зубрицкий сывăхри çуртсенчен пĕрине кĕрсе пытаннă. Тепĕр темиçе сехетрен пĕтĕм района полици хупăрласа илнĕ. Çакăн хыçăн йĕркеренех ухтару пуçланнă, ухтару вăхăтĕнче нимĕçсем пурне те хĕненĕ, пĕчĕк ачасемпе стариксене те хĕрхенсе тăман, хĕрсене ирĕксĕрленĕ, хаклă пурлăха пуçтарса илнĕ. Поляксене 50 çынна яхăн арестлесе концентрацилле лагере янă.

* * *

Совет металлургĕсем металл тупассине татти-сыпписĕр ӳстерсе пыраççĕ. Н-ски заводăн 2-мĕш мартен цехĕнчи 1-мĕш №-лĕ кăмака коллективĕ 7 уйăхри программăна июлĕн 4-мĕшĕнчех тултарнă, хальхи вăхăтра коллектив август планĕ шучĕпе продукци кăларать. Çак заводри 2-мĕш №-лĕ домна кăмакин мастерĕ Векличев юлташ вăрçă пуçланас умĕн пенси çине куçма шухăшланă, анчах гитлерла бандитсем Совет Союзĕ çине тапăннă май вăл производствăнах юлнă. Векличев юлташ 10 кунхи плана 110,5 процент тултарнă, планран ирттерсе çĕршер тонна чугун панă. Ворошиловград облаçĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан заводри мартен цехĕн коллективĕ планран ирттерсе кашни кунах çĕршер тонна пысăк пахалăхлă хурçă кăларать. Удмурт республикинчи «Металлург» заводри рабочисем пурте нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Алапаевскри сталеплавильщиксем 15 кун хушшинче 25 хутчен васкавлă майпа хурçă шăратса кăларнă. Сталевар Зотов юлташ графикпа пăхнинчен 1 сехет те 40 минута малтан хурçă шăратнă.

Сывă пултăр Сталин!

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 23-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Ĕнер пĕрремĕш смена ĕç пуçлас умĕн древкомбинатри цехсенче пуринче те митингсем пулса иртрĕç. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа тата ССР Союзĕпе Чехословаки хушшинче тунă килĕшĕве пĕтĕм чĕререн кăмăлпа ăшшăн саламлаççĕ. Вĕсем фашизма пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшса пыма пулаççĕ.

Комбинатри виççĕмĕш номерлĕ цехри рабочисен митингĕнче цех начальникĕ, комсомолец Анисимов юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн çамрăк Хĕрлĕ Çар граждăн вăрçин çулĕсенче тăван çĕршыва тăшманченчен сыхласа хăварнă. Аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыв никам çĕнтерейми хăватлă держава пулса тăчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа килсе тухнă ирсĕр фашизма çĕмĕрсе тăкăпăр.

Цехсенчи митингсенче пуринче те ĕç тухăçлăхне ик-виç хут ӳстерсе пырса Хĕрлĕ Çара пулăшса тăма пулса резолюцисем йышăннă.

Тăваттăмĕш номерлĕ цехри митингра йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине чĕререн саламлаççĕ. Хамăрăн Нарком—аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе фашистла вăрă-хурахсене ĕмĕрлĕхех пĕтерсе тăкăпăр. Эпир ĕçри хастарлăха ик-виç хут ӳстерме, революциллĕ сыхăлăха вăйлатма, организацилĕхе çирĕплетме пулатпăр. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, тăшмана çĕнтерсе çĕмĕрсе тăкичченех çапăçатпăр.

Çавăн пекех, «Большевик» заводри цехсенче те нумай çынлă митингсем пулса иртрĕç.

ХАР. ЛИСИН.

СССР Союзне хирĕç пыракан вăрçăра нимĕçсен фашистла войскисем отравляющи веществосемпе анлăн усă курма хатĕрленни çинчен калакан Германин главнăй командованийĕн секретлă документĕсем

Июлĕн 15-мĕшĕнче, Ситняран хĕвеланăç енчи çапăçусенче, Псковран хĕвелтухăç еннелле, нимĕç чăсĕсем каялла чакнă чухне пирĕн войскăсем противникăн 52-мĕш миометнăй химически полкĕн иккĕмĕш батальонĕн секретлă документĕсемпе хими пурлăхне туртса илнĕ. Документсем тултарнă пакетсенчен пĕрин çинче çакăн пек çырса хунисем пур: «мобилизацилле ĕç», «тăшман аллине тем тусан та памалла мар», «главнăй командовани штабĕнчен», «индантрен», «сигнал панă хыççăн çеç уçмалла».

Çак асăннă пакетра çакнашкал секретлă документсем пулнă:

1. НД—199-мĕш №-лĕ вăрттăн инструкци «химиллĕ снарядсемпе тата минăсемпе пересси», Лют, 1940 çулти издани.

2. Иртнĕ çулти июньре войскăсене ярса панă инструкци çумне хушса çырнă секретлă çырусем.

Çав документсенче отравляющи веществосемпе усă курмалли техникăпа тактика çинчен (химиллĕ боеприпассене расходламалли нормăсене те кĕртсе) тĕплĕн туса хатĕрленĕ кăтартусем пур. Инструкци çумне хушса çырнисенче çапла кăтартса панă: химически войскăсем «40» образецлă, 10 сантиметр калибрлă тата «Д» образецлă минометсем, çавăн пекех виçĕ йышши химически çĕнĕ минăсем илĕç. Вăл минăсем çаксем пулаççĕ:

а) пĕр шупка-кăвак йĕрлĕ мина, унăн ăшне сывламалли органсене сиен тăвакан отравляющи вещество тултарнă;

б) отравляющи вещество тултарнă икĕ шупка-кăвак йĕрлĕ мина, вăл пĕр шупка-кăвак йĕрлĕ минăран чылай хăвăртрах çурăлса сиенлет тата икĕ хут вăйлăрах;

в) пĕр симĕс йĕрлĕ мина, унăн корпусĕ çинче «38» цифра. Ку мина ăшне сывламалли органсемпе ӳпкене, çавăн пекех ӳте сиен тăвакан отравляющи вещество тултарнă. Туртса илнĕ документсенче химиллĕ майпа кĕтмен çĕртен пырса тапăнма кирлине палланă тунă.

Инструкци çакăн çинчен çирĕплĕн кăтартса парать: отравляющи веществосемпе пысăккăн усă курмалла тата, главнăй командован панă приказ тăрăх, вĕсем тапăнмалли средство пулмалла.

Документсен текстĕсенчен çакă курăнать: отравляющи веществосемпе усă курмалли тĕрлĕ инструкцисене 1940 çулта туса хатĕрленĕ тата чассене 1941 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче, урăхла каласан, Совет Союзĕ çине Германия ултавлăн тапăниччен 11 кун малтан ярса панă.

Германи çар часĕсен туртса илнĕ секретлă документĕсем çакна уççăн кăтартса параççĕ:

Пĕрремĕшĕнчен, Германин действующи войскисен составĕнче специальнăй химически чассем пур, вăл чассем 1940—41 çулсенче çĕнĕ образецлă вооруженисем — отравляющи вещество тултарнă минометсем тата минăсем илнĕ;

иккĕмĕшĕнчен, химиллĕ майпа тапăнас техникăпа тактикăна Германи командованийĕ тĕплĕн туса хатĕрленĕ, отравляющи веществосемпе пысăккăн усă курса, вăл химиллĕ атакăсем тума хатĕрленет.

«Вăрçа çиçĕм пек хăвăрт» вĕçлес тактика пурпĕрех арканса каяссине курса, Германи фашизмĕ çĕнĕрен тĕлĕнмелле киревсĕр ĕç тума — отравляющи веществосемпе анлăн усă курма вăрттăн хатĕрленет.

Химиллĕ вăрçа хатĕрленнипе, Германи правительстви 1925 çулти июнĕн 17-мĕшĕнче Женевăра тунă килĕшĕве ултавлăн пăсать. Вăл килĕшӳ çине Германия 1939 çулта хăй ирĕкĕпе алă пуснă. Çав килĕшӳ тăрăх вăрçăра отравляющи веществосемпе усă курма чараççĕ.

Сталин пире çĕнтерӳ патне илсе пырать

Июлĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарти спиртзаводри рабочисен тата служащисен митингĕ пулса иртрĕ.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Дерюгин юлташ митинга пухăннисене СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ Указ йышăнни çинчен каласа панă. Дерюгин юлташ совет халăхĕн аслă çулпуçĕ, гениллĕ стратег, тактик тата полководец Сталин юлташ граждăн вăрçи çулĕсенче тунă историллĕ ĕçсем çинче чарăнса тăрать. Вăл коллектива ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме чĕнет.

Кокарев тата Ванюков юлташсем оборона ĕçне вăйлатма чĕнеççĕ.

Завод коллективĕ СССР Верховный Совет Президиумĕн Указне чĕререн ырлать.

— Сталин ертсе пынипе пирĕн çĕршыв сахал мар çĕнтерӳсем тунă, Сталин юлташ ертсе пынипе çак хаяр кĕрешӳре те гитлерла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкатпăр, — тенĕ митинг йышăннă резолюцире.

Ăçта Сталин, унта çĕнтерӳ

Хусан чугунçулĕн Шупашкар станцинчи тата çул дистанцинчи рабочисемпе служащисем аслă стратег, полководец Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ кăларнă Указа питĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Сталин юлташа Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă ятпа, июлĕн 21-мĕшĕнче станцире тата çул дистанцинче ĕçлекенсем митингсем туса ирттернĕ. Рабочисемпе служащисем хăйсем йышăннă резолюцире чугунçул транспортне тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлеттерме, ĕçре хурçă пек çирĕп дисциплина тума пулнă.

— Ăçта Сталин, çавăнта çĕнтерӳ! Граждăн вăрçи вăхăтĕнче Сталин юлташ фронтсен хăрушă участокĕсенче пулса, тăшмансене хирĕç татăклăн кĕрешме пирĕн Хĕрлĕ Çара илсе карĕ, çĕнтерӳ пирте пулчĕ. Çак отечественнăй вăрçăра та Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕн хĕçпăаллă вăйĕ фашистла Германие çĕмĕрсе тăкĕ, ĕçхалăхне ирĕке кăларĕ.

Тăшмана çĕнтерессе çирĕппĕн шанатпăр

ШУПАШКАР. Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен пĕлтернĕ хыпара Шупашкарти Коопинсоюзра ĕçлекенсем хаваслăн кĕтсе илчĕç.

— Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви Сталин юлташа фронтра ялanах чи хăрушă участоксене яна. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче пирĕн çамрăк Хĕрлĕ Çар начар хĕçпăаллă тата выçă пулнă пулсан та Сталин юлташ ертсе пынипе белогвардеецсене ним юлми çапса çĕмĕрнĕ. Халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар малта пыракан çĕнĕ техникăпа хĕçпăаллаланнă. Пирĕн мĕнпур совет халăхĕ тăшмана хирĕç тăрса ăна çĕнтеричченех вăрçма хатĕр. Сталин юлташ ертсе пынипе тăшмана çĕр çинчен шăлса пăрахассине шансах тăратпăр, — теççĕ Коопинсоюзра ĕçлекенсем.

— Эпир пĕтĕм вăя хурса тăрăшма, ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме сăмах паратпăр, тăван çĕршывăн тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса çапăçма хатĕр.

М. МАЛЬЦЕВ.

Гитлер вилĕмĕ çывхарать

ЕТĔРНЕ. Гитлерла Германие хирĕç пĕрле вăрçасси çинчен ССР Союзĕпе Великобритани правительствисем хушшинче Килĕшӳ тунине районри ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн саламласа ырлаççĕ.

«Пионер» колхозăн колхозникĕсем хĕрсе утă çулнă çĕре ялти пуçламăш шкул заведующийĕ Ф. Макаров юлташ пычĕ, вăл фашистла Германие хирĕç вăрçма Совет Союзĕпе Великобритани правительствисем Килĕшӳ тунине çинчен каласа панă. Колхозăри ытти агитаторсем те çак историллĕ тата политикăллă питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан документ çинчен колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

«Пионер» колхоз оборона крепоçĕ пулса тăчĕ. Кунти колхозниксем Германи палачĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшма хатĕр тăраççĕ. Ку колхоз государствăна 1941 çулăн сĕт-çу, çăмарта, аш-какай, çăм çарса татнă. Чи паха утăна государствăна параççĕ. Паянхи куна 122 центнер панă та ĕнтĕ.

Изамбайри «Смычка», Пушнарти Мичурин ячĕпе тăракан, Ядринори «XI лет Октября» колхозсенчи агитаторсем те колхозниксене çак историллĕ тата политикăллă пысăк вырăн йышăнакан документ çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

НИК. ЦВЕТКОВ.

ТИМОШЕНКО ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Кĕренленчĕ шурă пĕлĕт,
Ярăмланчĕ çутă ир...
Урнă йытсемпе вăрçмашкăн
Çил пек вĕçрĕмĕр эпир.

Урхамах-утсем çунатлă,
Чĕресемĕр — шĕл-кăвар.
Аслă Сталиншăн, çĕршывăшăн
Арăслан пек çапăçар!

Çĕнтерме кăна вĕреннĕ
Вăрçă хирĕнче эпир.
Ертсе кайрĕ Тимошенко —
Савнă маршал, командир.

Маршал хĕçĕнчен, маяк пек,
Вутлă çиçĕм сирпĕнет;
Утă çулнă пек çулать вăл
Урса кайнă йытсене.

Неман тăрăх, Днестр урлă
Чап саланчĕ ун çинчен.
Фашистсем те, шюцкорсем те
Чĕтĕреç ун хĕçĕнчен.

Урхамах-утсем çунатлă,
Чĕресем çунаç хĕмле...
Тимошенкăпа пĕрле
Урнă йытсене ваклатпăр.

Çапăçса эпир чап илнĕ,
Чапа тухăпăр татах.
Ертсе кайрĕ Тимошенко
Çĕнтерӳллĕ похода.

М. ЯСТРАН.

Июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем Мускав çине пырса тапăнни

Июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем, пурĕ 150 самолета яхăн, Мускав çине тапăнма хăтланнă. Çак иккĕмĕш хут хăтланни те, малтанхи пекех, нимĕç авиацийĕшĕн ăнăçсăр пулнă. Пирĕн авиацин заградительнăй отрячĕсем тата зенитнăй артиллеририн персе тăни противникăн тĕп вăйĕсене Мускав патне пыма паман. Хула патне уйрăм самолетсем çеç пыма пултарнă. Пурăнмалли çурт-çапа килсе тухнă ирсĕр фашизма çĕмĕрсе тăкăпăр.

Цехсенчи митингсенче пуринче те ĕç тухăçлăхне ик-виç хут ӳстерсе пырса Хĕрлĕ Çара пулăшса тăма пулса резолюцисем йышăннă.

Тăваттăмĕш номерлĕ цехри митингра йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине чĕререн саламлаççĕ. Хамăрăн Нарком—аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе фашистла вăрă-хурахсене ĕмĕрлĕхех пĕтерсе тăкăпăр. Эпир ĕçри хастарлăха ик-виç хут ӳстерме, революциллĕ сыхăлăха вăйлатма, организацилĕхе çирĕплетме пулатпăр. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, тăшмана çĕнтерсе çĕмĕрсе тăкичченех çапăçатпăр.

Çавăн пекех, «Большевик» заводри цехсенче те нумай çынлă митингсем пулса иртрĕç.

ХАР. ЛИСИН.

Катер экипажĕ тăшман атакине сирсе пăрахнă

ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. (ТАСС). Миноносецсем противник позицине персе пĕтернĕ. Карапсем каялла тухма хатĕрленнĕ. Питĕ çӳлте тăшман самолечĕ курăнса кайнă. Вăл пысăк авиагруппăна ертсе пынă.

Тепĕр темиçе минутăран сывлăшра моторсем кĕрлесе тăма тытăннă. Совет тинĕс-çар флочĕн карапĕсем çине бомбăсем пăрахакан штурмовой авиаци самолечĕсем тапăннă.

Пикировка тăвакан бомбардировщиксем икĕ отряда пайланнă. Пĕри миноносец çине хăвăрт вĕçсе пынă, тепри инçех мар тăракан катер çинелле вĕçнĕ.

Карапсем тăшман çине зенитнăй артиллеririпе пеме тытăннă. Вăйлă тата пысăк çапăçу пынă. Фашистсен авиацийĕ пикировка тăвакан бомбардировщикне çухатнă.

Фашистсен тапăнăвне сирсе пăрахнă. Миноносецсем малалла çул тытнă, катер Н. ятлă бухта патнелле кайнă. Экипажăн тепĕр çĕнĕ боевой заданине пурнăçламалла пулнă.

Катер çыран хĕрне çывхарса пынă. Палуба çинче тăшман войскисем вырнаçса тăнă линине уйăрса илме май пулнă. Противник çине пеме тытăннă. Питĕ те тĕл персе унăн персе тăмалли вырăнне çĕмĕрсе тăкаççĕ. Заданине пурнăçа кĕртнĕ. Сасартăк тинĕсе хупăрласа илнĕ пĕлĕтсем хушшинчен бомбардировщиксен кĕтĕвĕ вĕçсе тухса катер çине тапăнать. Сывлăш мотор шавĕпе, ӳкекен бомбăсем шăхăрнипе, пулемет шатăртатса тăнипе тулса лараять...

Бомбардировщиксем катер çине сакăрçĕр метр çӳллĕшĕнче пикировка туса тапăннă, кашни самолет çинчен пилĕкшер бомба таран пăрахнă. Пикировка тума пăрахса автомат-тупăсенчен персе тăнă. Катер тавра тинĕс шавланă, кăпăкланнă, пысăк хумсем пырса çапнă. Карап çӳлелле çĕкленсе ӳкнĕ те, унтан хăвăрт аялалла аннă. Бомбăсем, пулясем, снарядсем ун айккине пырса ӳкнĕ.

Вăйлă хумсемпе çил-тăвăлсене хăнăхнă паттăр моряксем кашниех тăшмана хирĕç хăюллăн тата шикленмесĕр кĕрешнĕ. Рулевой Векшин бомба пăрахнă саманта хăвăрт тата пысăк ăсталăхпа уйăрса илме вĕреннĕ, вăл руленче темиçе тĕлте пушарсем тухнă, вĕсене пушар командисемпе хуларăн çынсем сӳнтернĕ.

Пушара пула, пĕр больница тата тепĕр поликлиника вăйлăн сиенленнĕ. Вилнисемпе амаллисем темиçе вунă çын шутланаççĕ. Çар объекчĕсенчен пĕрне те сиен тăвайман. Туллимăр даннăйсем тăрăх, пирĕн çĕрлехи истребительсем тата зенитнăй артиллеririпен персе нимĕçсен 15 самолетне персе антарнă.

Продовольствин вырăнти ресурсисем

Хальхи вăрçă—пуринчен ытларах резервсен вăрçи пулса тăрать. Пирĕн государство пысăк резервсем туса пырать, вăл уйрăмах фронт нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе тата халăха продовольстви çителĕклĕ парса тăрас тĕлĕшпе пысăк резервсем тăвать.

Халĕ вырăнти организацисем умĕнче питех те пысăк задача тăрать:

Продовольствин вырăнти ресурсисене пур майсемпе те сарса пымалла.

Продовольствине пур майсемпе те перекетлемелле.

Пирĕн çĕршыв пысăк тухăçлă тĕштырăсем тата техникăллă культурăсем пăхса ӳстерчĕ. Пахча-çимĕçсем вăйлăн ӳсеççĕ. Колхозсемпе совхозсенчи вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç вăйланса пырать. Пĕтĕм ĕçе вăрçă чухнехи пек çĕнетсе, вырăнти организацисен тырпула кĕске вăхăтра, тăкаксемсĕр тата пысăк пахалăхпа пухса кĕрессишĕн, çĕрçĕпе вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла тĕреклетсе пырассишĕн кĕрешмелле.

Халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре продовольствин вырăнти ресурсисемпе анлăн усă курни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вырăнта продовольстви мĕн чухлĕ нумайрах, государство центрти фондсенчен çавăн чухлĕ сахалрах уйăрса памалла, государство, çапла вара, фронта продуктсем ытларах пама тата заласа ытларах хума пултарать. Çак тĕлĕшпе тăвакан кирек мĕнле пуçарулăха та—предприятисем çумĕнче подсобнăй хуçалăхсем тунине, вырăнти кӳлĕсемпе пĕвесенче пулă тытнине, столовăйсем çумĕнче сыснасем самăртнине тата ытти те,—партипе правительство яланах ырласа пулăшса пынă. Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра продовольствин вырăнти ресурсисене пур майсемпе те нумайлатса пыни тӳррĕмĕнех фронта пулăшни пулса тăрать, тăшмана çĕнтерме пулăшать.

Продовольствин вырăнти таварĕсене туса кăларма пур çĕрте те пысăк майсем пур. Сăмахран, Вологда облаçĕнчи Пришекснински районах илме пулать. Районра кăмпасем тата çырласем — клюква, брусника, хăмла çырли, хура çырла, хурлăхан çырли, кĕтмĕл,—питĕ нумай ӳсеççĕ. Район территорийĕ урлă Шексна юханшывĕ, Угла, Чуровка, Сизьма, Ковжа шывĕсем юхса выртаççĕ. Кунта пĕтĕмпе 14 кӳлĕсемпе пĕвесем пур. Пулă тытас ĕçе, кăмпа тата çырласем пухассине лайăх йĕркелесе ярсан, халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе район вырăнти вăйсемпе нумай ĕç тума пултарать. Пулă тытассине, килте ӳсекен çырласемпе вăрмансенче ӳсекен улма-çырласене тата кăмпасене пухас ĕçе пирĕн çĕршывăн вунпилĕк облаçĕсемпе крайĕсенче организацилеме пулать тата организацилемелле те. Продовольствин çак ресурсисем халăха апат-çимĕç продуктисем парса тăрас ĕçре пысăк пулăшу памалла.

Хăй вăхăтĕнче Мускав облаçĕнчи Глуховский комбинатри текстильщиксен коллективĕ, продовольствисем туса илекен подсобнăй хуçалăх туса, питех те паха пуçару турĕ. Çав хуçалăх столовăйсене, ачасен сачĕсемпе яслисене продуктсем парса тăрас ĕçре çав тери пысăк вырăн йышăнчĕ. Глуховецсен пуçарăвне хăшпĕр вырăнсенче йышăнса илсе пурнăçа кĕртрĕç. Предприятисем çумĕнче пахча-çимĕç хуçалăхĕсем, сысна самăртмалли пунктсем тума тытăнчĕç. Анчах çапах та, глуховецсен примерне пур çĕрте те пурнăçа кĕртрĕç тесе калама çук-ха. Çак çитменлĕхе май пур таранах хăвăрт пĕтермелле, предприятисем çумĕнче продовольстви хуçалăхĕсем тăвассине анлăн сарса пымалла, сыснасем самăртмалла, пулă тытмалла, чăх-чĕпсем ĕрчетмелле, пахча-çимĕçсемпе улма-çырласене хатĕрлесе хумалла.

Çак ĕçе вырăнти суту-илӳ организацисен те туса пымалла. Сыснасене пур çĕрте те самăртмалла. Суту-илӳ организацисен улма-çырла хатĕрлекен, кăмпасене типĕтекен, тăварлакан пунктсен, коптильнăй пунктсен хисепне вăйлăн ӳстермелле, çавăн пекех тата катка-пичкесем вырăнта хатĕрлес ĕçе те йĕркелесе ямалла. Суту-илӳ тăвакан хăшпĕр организацисем продовольствин вырăнти базине тăвас тĕлĕшпе хăшпĕр опыта туянчĕç ĕнтĕ. Сăмахран, Бакурн нефть районĕнчи суту-илӳ организацийĕ 300 сысна самăртма шутланă. Халĕ вĕсен хисепне 500 çитерме йышăннă. Свинарниксем хатĕрленĕ, çамрăк вылăхсене сутăн илес ĕç ăнăçлăн пулса пырать.

Мускав хулинчи Пролетарски районри столовăйсен тресчĕ çулталăк пуçламĕшĕнче сыснасем самăртмалли пункт организацилеме. Çав пунктра сыснасене столовăйсен отхочĕсемпе усă курса самăртаççĕ. Столовăйсенче отходсене пухас ĕçе организацилеме. 5 уйăх хушшинче Пролетарски районри юлташсем 90 сысна самăртма шутланă пулнă, чăнипе вара 229 сысна самăртнă.

Пĕрлешӳллĕ апат-çимĕç ĕçĕн кашни организацийĕн, кашни хула, район тата поселок совечĕн çавăн пек майсем пур.

Продовольствин вырăнти базине тăвас ыйту партин, советсен тата профсоюзсен вырăнти организацийĕсен кун йĕркине çĕнĕрен тухса тăмалла. Кашни заводăн, кашни хулан хăйĕн продовольстви бази пултăр! Партин, советсен, профсоюзсен кашни работникĕ халăха продовольстви парса тăрас, продовольстви таварĕсене вырăнтан вырăна куçарса çӳрессине чакарас, продовольствин вырăнти ресурсисене май пур таранах вăйлăн аталантарас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле. Çакă вара чăннипех те фронта пулăшни пулĕ.

(«ПРАВДА» хаçатран).

Закон пурнăçа кĕрсе пырать

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хунса тӳлесси çинчен» постановлени йышăнни тăватă уйăх иртрĕ.

Вăрмар районĕнчи колхозниксене çак постановлени ялхуçалăх ĕçĕнче татах та çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Колхозсем ĕçе тĕрĕс йĕркелесе янипе кăçалхи çул çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пурнăçларĕç. Тырпула пăхса çитĕнтерес ĕçе те аван организацилерĕç. Акса пĕтернĕ хыççăн, мĕншăн туртăм вăйне ирхи çĕртме тăвас ĕçе, çын вăйне колхозри кулленхи ĕçе (тислĕк кăларасси, çум çумласси т. ыт. те) куçарса пынипе вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнчĕç. Хальхи вăхăтра районри колхозсем утă çулса пĕтерсе, хăйсем валли выльăх апатĕ хатĕрленипе пĕрлех, государствăна утă парса татрĕç. Тикашри «Большевик», Арапуçĕнчи «Арабось», Чĕкетури Ворошилов ячĕпе тăракан тата Мăнçырмари «Чăваш хресченĕ» т. ыт. колхозсем чи малтан çулнă паха утăна государствăна парса, обязательствăна пурнăçларĕç.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă хыççăн колхозниксен хастарлăхĕ татах ӳсрĕ. Колхозсен уйăхрĕсенче ĕçлекенсемпе пĕрлех, фермăсенче ĕçлекенсем те выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне пысăкăн хăпартса пыраççĕ. Акă Кĕтеснерти «ВКП(б) XV-мĕш съезчĕ» колхозăн фермисенче ĕçлекенсене илсе пăхар. Фермăсен заведующийĕ И. Казанцев юлташ массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса пынипе 1941 çулти малтанхи çурçулта пысăк çитĕнӳсем турĕ. Фермăра ĕçлекенсем пурте тенĕ пекех ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пырса, выльăхсенчен ытларах продукци илессишĕн кĕрешеççĕ.

Доярка Анна Васильева 6 уйăх хушшинче, хăй пăхакан 10 ĕнерен 6633,9 литр сĕт илмелле пулнă пулсан, 8276 литр сĕт суса илнĕ. Клавдия Алексеева юлташ 7173,5 литр вырăнне 8944,6 литр, Иустина Григорьева 9215,3 литр вырăнне 9954,5 литр сĕт суса илнĕ. Çапла ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх Васильева юлташ 246,3 литр тата пăрусене чипер пăхса ӳстернĕшĕн 75 литр, пурĕ 321,3 литр сĕтĕн илме тивĕç. Çаван пекех К. Алексеева юлташ 340 литр, Григорьева юлташ 184,6 литр сĕт илме тивĕç. Кăçалхи çул фермăра пĕр пăру та вилмен. Пăрусен талăкра 0,5 килограмм хушăнса пымалла пулсан, Фекла Николаева пăхакан пăрусем кунне 0,6 килограмм, Матрена Афанасьева пăхакан пăрусем 0,7 килограмм ӳссе пынă.

Сурăхсем пăхакан Анисия Иванова юлташ 43 путек илес вырăнне 46 путек илсе пăхса ӳстернĕ, 92 килограмм çăм илме пăхнă пулсан 132,4 килограмм çăм касса илнĕ. Анисимова юлташ ытлашши çăм илнĕшĕн, натурăпа 6,0 килограмм çăм илме тивĕç.

ВЛКСМ пуçламĕш организаци секретарĕ Татьяна Степанова хăй пăхакан чăхсенчен 505 çăмарта ытларах илнĕ.

Сыснасене пăхакан Анастасия Калюкова, хăй пăхакан сыснасен виçине 990 килограмм ӳстермелле пулнă пулсан, 1137 килограма çитернĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене ытти фермăсенчен те илсе кăтартма пулать.

Ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен кăларнă закон колхозниксен хастарлăхне, общественнăй хуçалăха çирĕплетессишĕн çине тăрса ĕçлессине нумай вăйлатрĕ.

И. СТЕПАНОВ.

Профсоюзсен хисеплĕ ĕçĕ

ВЦСПС секретариачĕ кăçалхи июлĕн 3-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи профсоюзсене пурне те производствăран уйăрмасăр медсестрасем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе пуçарса яма хушрĕ. Çак ăтăшуллă произведенире Гитлерăн тĕнчене çавăрса илес тата пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи çынсенчен нимĕç помещикĕсен хирĕсенче, нимĕç миллионерĕсен шахтисемпе завочĕсенче усă курмалли ĕç выльăхĕ тумалли планна каласа панă. Çак тĕллеве çурнăçа кĕртессинче, национальноçсене тата халăхсем хăйсем тĕллĕн пулса пурăнассине пĕтерессинче — Гитлер хăйĕн пĕтĕм ĕçĕн тĕп шухăшне курса тăрать.

Фашистсен шурă япалана хура, хура япалана шурă тесе калас яланхи йăлине пăхăнса, Гитлер халăхсен ирĕклĕхĕпе чыслăхĕнчен мăшкăллассине... чи пысăккăн палăракан гуманизм пулать, тесе пĕлтерет. Вăл шăпах çапла çырать: «Гуманизм идейисем çӳлте тăракан раса пĕтĕм тĕнчене çавăрса илсе çĕр çинче пуçпуçлса тăма тытăнсан пурнăçа кĕреççĕ»; «пур майсемпе те тĕнчене немĕçсем çавăрса илмелле тăвас пулать».

Çавтери аташуллă идея ăçтан пулса тухма пултарнă-ха? Халăхсемпе государствăсене пĕтерсе пыракан çынçиесен çак «философине» сĕткен паракан çĕлкуçĕ ăçта вăл?

Гитлер çапла ответ парать: ку вăл— германецсен раси «господасен раси» пулса ытти пур халăхсенчен те çӳлте тăнинче немĕш.

Çак хупахри политик француз халăхне ĕçлеме пултарайман тата «инлесе пыракан» халăх, тет, англичансене пур майсемпе те мăшкăлласа тиркет, румынсене, болгарсене тата чехсене вăл обезьянăсемпе танлаштарать, поляксене вăлерсе пĕтерет, вырăс халăхне «низший раса» тесе шутлать, японн халăхне «пулса çитмен çынсем» тесе пĕлтерет т. ыт те. Гитлер халăхăн историйĕпе унăн тивĕçлĕхне хăйĕн наркăмăшлă сурчăкĕпе сурса вараламан пĕр халăх та çук вара.

Хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме, мăра ĕçлекенсем пурте тенĕ пекех ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пырса, выльăхсенчен ытларах продукци илессишĕн кĕрешеççĕ.

Доярка Анна Васильева 6 уйăх хушшинче, хăй пăхакан 10 ĕнерен 6633,9 литр сĕт илмелле пулнă пулсан, 8276 литр сĕт суса илнĕ. Клавдия Алексеева юлташ 7173,5 литр вырăнне 8944,6 литр, Иустина Григорьева 9215,3 литр вырăнне 9954,5 литр сĕт суса илнĕ. Çапла ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх Васильева юлташ 246,3 литр тата пăрусене чипер пăхса ӳстернĕшĕн 75 литр, пурĕ 321,3 литр сĕтĕн илме тивĕç. Çаван пекех К. Алексеева юлташ 340 литр, Григорьева юлташ 184,6 литр сĕт илме тивĕç. Кăçалхи çул фермăра пĕр пăру та вилмен. Пăрусен талăкра 0,5 килограмм хушăнса пымалла пулсан, Фекла Николаева пăхакан пăрусем кунне 0,6 килограмм, Матрена Афанасьева пăхакан пăрусем 0,7 килограмм ӳссе пынă.

Сурăхсем пăхакан Анисия Иванова юлташ 43 путек илес вырăнне 46 путек илсе пăхса ӳстернĕ, 92 килограмм çăм илме пăхнă пулсан 132,4 килограмм çăм касса илнĕ. Анисимова юлташ ытлашши çăм илнĕшĕн, натурăпа 6,0 килограмм çăм илме тивĕç.

ВЛКСМ пуçламĕш организаци секретарĕ Татьяна Степанова хăй пăхакан чăхсенчен 505 çăмарта ытларах илнĕ.

Сыснасене пăхакан Анастасия Калюкова, хăй пăхакан сыснасен виçине 990 килограмм ӳстермелле пулнă пулсан, 1137 килограма çитернĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене ытти фермăсенчен те илсе кăтартма пулать.

Ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен кăларнă закон колхозниксен хастарлăхне, общественнăй хуçалăха çирĕплетессишĕн çине тăрса ĕçлессине нумай вăйлатрĕ.

И. СТЕПАНОВ.

КОЛХОЗ УЙХИРĔНЧЕ

Çанталăк уяр та лăпкă тăрать. Сайра-хутра çеç кăнтăр енчен вĕрекен çемçе çил питçăмартине кăтăклантарать. Таврара кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Авă кунтах колхозăн ыраш уйĕ тăсăлса выртать. Мĕнле илемлĕ вăл, пĕр пек çитĕнет! Ун çине пăхсан пĕтĕм чун савăнса каять. Çын кĕрсе кайсан, çын курăнмасть.

Таçта-таçта аякра, вăрман хĕрринче, юрă сасси илтĕнет. Илемлĕ юрă, хаваслăх юрри вăл. «Подборное» колхоз членĕсем юрлаççĕ ăна. Вĕсем утă тавăраççĕ. Ваттисем те, çамрăкксем те пур кунта, анчах пуринчен ытларах хĕрарăмсем. Кашнин аллинчех кĕрепле, сенĕк вылянать, ахаль тăракансем çук. Çулса пăрахнă утă сахал мар, таçтанах сарăлса выртать. Паян чи кăна 5 гектар ытла çулнă. Мĕн чухлĕ тата ытти кунсенче çулнисем.

Вăхăт пĕр сехет тĕлнелле çывхарать. Утă тавăрса пĕтернĕ. Хаваслă колхозниксем пурте пĕр çĕре пухăнаççĕ. Бригадир вĕсене çитес кунсенче мĕнмĕн тумалли çинчен кĕскен каласа парать. Унтан колхозниксем йĕркеленсе колхоз столовăйне апатланма каяççĕ. Паçăрхи юрă халь татах та хытăрахăн, татах та уççăнтарахăн янăрама пуçлать.

Улхаш ялсоветĕнчи «Подборное» колхозра халь нихăçанхинчен те ытларах пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Кăнтăр кунĕнче килте никама та тупма çук. Хăшпĕр çуртсенче кăна ваттисем юлнă, пĕчĕк ачасем—чĕчĕ ачинчен пуçласа 6 çула çитичченех—яслĕре. Çаванпа пур колхозницăсем те колхоз производствине хутшăннă.

Правлени канцелярийĕнче колхоз учетчикĕ ларать. Унăн ĕç нумай. Вăл кашни кунхи ĕç итогĕсене шутлать. Каçхине акă ун патне колхозниксем килеççĕ, унччен ĕнерхи ĕçсен результатĕсене шутласа пĕтермелле.

Стена çумĕнче кам миçе ĕçкунĕ тунине кăтартакан список çакăнса тăрать. Степан Бакараев ячĕ тĕлĕнче — 291, Анастасия Лисина ячĕ тĕлĕнче — 110 цифрăсем тăраççĕ. Ку вăл кăçал тунă ĕçкунĕсем. Кун пек цифрăсене ытти колхозниксен ячĕсем тĕлĕнче те курма пулать.

Çак кунсенче колхозниксем вир, йĕтĕн, сĕлĕ тата ытти культурăсем çинчи çумкурăкĕсене çумласа пĕтерчĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах хĕрарăмсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Халĕ акă вĕсем утă çулаççĕ, пуçтараççĕ. А. Медведева, Л. Бакараева, М. Николаева юлташсем хăйсен ĕç нормисене куллен 120—150 процент тултараççĕ.

Ялтан тухсанах йĕтĕн уйĕ курăнать. Вăл та чуна хĕпĕртеттерет: тип-тикĕс, лайăх ӳсет йĕтĕн, ун çинче пĕр çум та çук.

Тухăçлă йĕтĕн туса илессишĕн колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра шкул ачисем те пире пысăк пулăшу параççĕ.

«Подборное» колхоз членĕсем çум çумланă, утă çулнă вăхăтрах уборкăна та хĕрсех хатĕрленеççĕ. Вĕсем тырра пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕме шухăшласçĕ. «Пĕр пĕрчĕ тăккаламасăр, пĕр пучах та хăвармасăр!» çакăн пек лозунг вĕсен.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлать. Паянхи куна вăл 1941 çулхăн аш-какай, çамарта, сĕт-çу, çăм парса татнă.

Çĕмĕрле. **(Хамăр корр.).**

Пĕр ĕç те чарăнса тăмасть

ИШЛЕЙ. Вăйпитти çынсенчен хăшпĕрисем Хĕрлĕ Çара кайнă пулин те, колхозсенче нимĕнле ĕç те кая юлмасть. Хĕрлĕ Çара кайнисем вырăнне хĕрарăмсем тата ватă çынсем хĕрӳллĕн ĕçе тытăнаççĕ. «Августăн 1-мĕш» колхоз счетоводчĕ Кудряшов Хĕрлĕ Çара кайсанах, Хусанти юридически институтра вĕренекен, халĕ каникула килнĕ Н. Михайлова юлташ счетовод ĕçне тытăнчĕ.

Мамăшри Буденный ячĕпе тăракан колхозри бригадир З. Малютин юлташ Хĕрлĕ Çара кайнă. Вăл фронта кайнă кунах, бригадăна унăн йăмăкĕ комсомолка Н. Малютина юлташ ертсе пыма тытăнчĕ.

А. КОЛЕНОВ.

Колхозсем государство умĕнчи аш-какай обязательствине срокчен тултараççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Елчĕк районĕнчи «Трактор» тата Канаш районĕнчи «Искра» колхозсен вăкăрĕсем, вĕсене государствăна панă.

А. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

ЛАЙĂХ КĔНЕКЕ

Ф. Çитта. „Фронтри калавсем". Чăвашгосиздат, 1941 ç.

Отечественнăй вăрçă пуçланнă май Чăвашсен Государство Издательстви оборонăллă темăпа çырнă кĕнекесене массăллăн кăларма тытăнчĕ. Ку ĕнтĕ пит те кирлĕ, усăллă ĕç.

Пирĕн умра — халь çеç пичетленсе тухнă çав кĕнекесенчен пĕри—«Фронтри калавсем». Кĕнекере пурĕ ултă калав. Вĕсен авторĕ — çар журналисчĕ Ф. Çитта, 1940 çулта белофинсене хирĕç пулнă çапăçусен участникĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен икĕлми хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен каласа кăтартать. Литературăллă пахалăх енĕпе пăхсан, тепĕр чăкăлтăш критиксем ку произведенисене тиркеме те пултарĕç, вĕсенче «художество» сахалтарах, тейĕç, анчах та материала, фактсене çумăр пек сапăнса тăнă пулăсем айĕнче пухса çырнă калавсем çавтери пысăк интереспа вуланаççĕ. Вĕсем пурте ĕнентерӳллĕ, хумхантаракан произведенисем пулса тăраççĕ.

Акă, автор Семин командирăн снайперла оруди расчечĕ çинчен каласа кăтартать («Артиллеристсем»). Ку расчет çавтери тĕл персе, белофинсен тупписемпе пулемечĕсене сывлăшалла сирпĕтет, ДОТ-сене аркатать. Орудие ремонт кирлĕ пулсан—тыла, мастерскоя илсе каяс вырăнне, расчет ăна çапăçу хирĕнчех, хăйсен вăйĕпех тӳрлетет. Сасартăк вĕсем çине тăшман засади тапăнать, анчах пăттăр артиллеристсем сухалса каймаççĕ, хăйсенчен темиçе хут йышлă бандитсене тӳрĕ наводкăпа пере-пере аркатаççĕ. Вĕсене çапла майпа пĕтерсе хурсан, расчет орудие каллех малти позицине илсе тухса, тăшман йăвисене аркатма тытăнать. Тăшмансене паттăрăн çĕмĕрнĕшĕн, кăштах вăхăт иртсен, Семин командирăн патвар кăкри çинче Ленин орденĕпе юнашар «Ылттăн çăлтăр» ялтăртатать...

«Паттăр разведчик» ятлă калавра автор Совет Союзĕн Геройĕ Иван Ульяков образне кăтартса парать. Çара кайничен парикмахер пулса ĕçленĕ çамрăк патриот фронтра бритва вырăнне граната тытса, тăшмана пит те пултарулăн «хырать»: нумай белофинсене пĕтереççĕ вăл пенĕ гранатăсем!

«Фронтри патриотка» калава та хумханмасăр вулама çук. Решетов хушаматлă политрукăн çамрăк арăмĕ Лена упăшкине хăй фронта кайма шухăшлани çинчен пĕлтерет. Упăшки килĕшет. Вара Лена чи вĕри çапăçусене кĕрсе каять, сураннăй боецсене пулăшса вилĕмрен хăтарать. Пĕр çапăçура унăн упăшкине вилмеллех амантаççĕ. Лена унăн вилли умĕнче хĕрӳллĕ сăмах калать те, упăшкин подразделенийĕне пĕрле çапăçăва ыткăнать...

Снайпер Ковкин пĕр-пĕччен 17 белофина пĕтерсе хурать.

Хăюллă разведчик Дарвин, хăйне панă темиçе красноармеецпа пĕрле тăшман окопĕсем çывăхĕнчи ултă ретлĕ йĕплĕ пралук карти патне упаленсе пырать те, белофинсем пулеметсенчен тем пекех персе тăнине пăхмасăрах приказа пурнăçлаççĕ: пралуксене нумай вырăнта касса татса, пехотăна наступлени тума çул уçаççĕ те, хăйсен чăсне чип-чиперех тавăрăнаççĕ.

Сборникăн вĕçне кĕртнĕ «Хисеплĕ пăшал» ятлă калава та ырламалла. Ĕç вăрçă хыççăн пулса иртет. Халь çеç Çара пынă çамрăк боец Иванова киввĕрех пăшал параççĕ. Вăл хăмăлсăр. Вара подразделени командирĕ орденоносец ăна çав пăшалăн историне каласа парать. Ку пăшал нумай çапăçусенче пулнă иккен, нумай тăшмансене пĕтернĕ, красноармеецсен пурнăçне çăлса хăварнă...

Çапла ĕнтĕ, сборнике кĕртнĕ пур калавсем те пысăк эмоци паракан, мобилизацилекен произведенисем пулса тăраççĕ. Ку кĕнекене мĕнле пулсан та массăсем патне хăвăртрах çитерме тăрăшмалла.

Л. АГАКОВ.

Вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илер

СĔРПУ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн районри пуçламăш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче 7.646 ача вĕреннĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче вĕренекенсен йышĕ иртнĕ çулхинчен 495 ача ытларах пулмалла.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарас тата вĕренӳ пахалăхне кунран кунах ӳстерсе пырас тесен, шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне пуд енчен те лайăх хатĕрлемелле. Çакна шута илсе районри пур шкулсенче те вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăнах çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăннă.

Шкул çурчĕсене юсанă çĕре учительсемпе колхозниксем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Тăрăшури пуçламăш шкул çуртне пĕтĕмпех колхозниксем хăйсен вăйĕпе юсарĕç.

План тăрăх, Çĕрпӳрипе Чурачăкри вăтам шкулсен çурчĕсене капитальнăй ремонт тумалла. Паянхи кун тĕлне Çĕрпӳри вăтам шкул çуртне юсаса пĕтереççĕ. Чурачăкри вăтам шкул çуртне юсама та стройматериалсене хатĕрлесе хунă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен стандартлă партăсем 300 штука, 25 шкаф тата 5 вăтам шкулта физкультура площадки туса çитермелле. Кипекçери вăтам шкулта партăсемпе класри доскасене тата шкафсене юсаса пĕтернĕ, çĕнĕрен 15 парта туяннă. Старакри вăтам шкулта физкультура площадки туса пĕтереççĕ.

Июлĕн 10-мĕш тĕлне шкулсем валли 1.029 кубла метр вутă туртăрса хатĕрленĕ. Шуртавăш, Енĕшкасси, Çырмапуç тата ытти ялсенчи шкулсем, колхозниксем активлăн пулăшнипе, хăй кăсмаллăхах вутă хатĕрленĕ. Йĕкĕрти вăтам шкулта вĕрентекен учительсем хăйсем те колхозниксемпе пĕрле вутă хатĕрлеме вăрмана тухса кайнă.

Шкулсем валли учебниксемпе нагляднăй пособисем илме 27.890 тенкĕлĕх заявка патăмăр. Вăл шутран чылай учебниксем тата нагляднăй пособисене илтĕмĕр те ĕнтĕ. Учительсем пур шкулсем валли те çитеççĕ.

А. АЛЕКСАНДРОВ.
Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ.

Çынçиенсен библийĕ

Германири влаçа фашистла вăрă-хурахсен шайки тытса иличчен темиçе çул малтан, çав шайкăн пуçлăхĕ Гитлер хăйĕн «Манăн кĕрешӳ» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Çак ăтăшуллă произведенире Гитлерăн тĕнчене çавăрса илес тата пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи çынсенчен нимĕç помещикĕсен хирĕсенче, нимĕç миллионерĕсен шахтисемпе завочĕсенче усă курмалли ĕç выльăхĕ тумалли планна каласа панă. Çак тĕллеве çурнăçа кĕртессинче, национальноçсене тата халăхсем хăйсем тĕллĕн пулса пурăнассине пĕтерессинче — Гитлер хăйĕн пĕтĕм ĕçĕн тĕп шухăшне курса тăрать.

Фашистсен шурă япалана хура, хура япалана шурă тесе калас яланхи йăлине пăхăнса, Гитлер халăхсен ирĕклĕхĕпе чыслăхĕнчен мăшкăллассине... чи пысăккăн палăракан гуманизм пулать, тесе пĕлтерет. Вăл шăпах çапла çырать: «Гуманизм идейисем çӳлте тăракан раса пĕтĕм тĕнчене çавăрса илсе çĕр çинче пуçпуçлса тăма тытăнсан пурнăçа кĕреççĕ»; «пур майсемпе те тĕнчене немĕçсем çавăрса илмелле тăвас пулать».

Çавтери аташуллă идея ăçтан пулса тухма пултарнă-ха? Халăхсемпе государствăсене пĕтерсе пыракан çынçиесен çак «философине» сĕткен паракан çĕлкуçĕ ăçта вăл?

Гитлер çапла ответ парать: ку вăл— германецсен раси «господасен раси» пулса ытти пур халăхсенчен те çӳлте тăнинче немĕш.

Çак хупахри политик француз халăхне ĕçлеме пултарайман тата «инлесе пыракан» халăх, тет, англичансене пур майсемпе те мăшкăллаласа тиркет, румынсене, болгарсене тата чехсене вăл обезьянăсемпе танлаштарать, поляксене вăлерсе пĕтерет, вырăс халăхне «низший раса» тесе шутлать, японн халăхне «пулса çитмен çынсем» тесе пĕлтерет т. ыт те. Гитлер халăхăн историйĕпе унăн тивĕçлĕхне хăйĕн наркăмăшлă сурчăкĕпе сурса вараламан пĕр халăх та çук вара.

Хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме, хăйне майлă çынсене тупма, Гитлер мăка шухăшлă мещенĕн чи кая юлнă, эгоистла, ирсĕр те пӳтсĕр туйăмĕсемпе усă курать, вăл пĕтĕм тĕнчерен тĕрме, фашистла надсмотрщиксен хĕрхенӳсĕр çапăрккипе хăваланипе ĕçлекен чурасем ĕçлесе паракан плантаци тума май килсен — этем сăнне сухатнă авантюристсен пĕчĕк ушкăнĕ валли пулмалли çавтери çăткăн та ашкăнуллă пурнăçăн картинипе илĕртсе хавхалантарать.

Фашизм нумай çĕр пин çынсене вĕлернĕ тата çĕршывран хăваласа кăларса янă, нумай çĕр пин ĕççыннисене концентрацилле лагерьсене хупса тартнă. Çаван пек «ырлăх» çеç кӳнĕ вăл немĕç халăхне. Гитлер сăмахĕсем тăрăх, фашистла юнлă террорăн тĕллевĕ пит те палла: вăл —халăха хăратса тăрасси. «Тĕнчене хăратнипе усă курса çеç тытса тăма пулать», — тесе çырать вăл хăйĕн çынçиенсен библийĕнче.

Террор — фашизмăн чи палли уйрăмлăхĕ. Кун çинчен, тĕслĕхрен, Гитлер хăйĕн майлă тăракан çынсем хушшинче каланă çакнашкал банчитла сăмахсем ĕнентерсе параççĕ: «Пирĕн «лапкă пурнăç» тата ырлăх кăмăлне пĕтерме пултаратпăр... Ырă туйăмсем вăхăчĕ иртсе кайрĕ».

1933 çултан — Гитлер преступникĕсем влаçа пынă вăхăтран пуçласа — фашизм вăрçăсем туса пырать. 1933 — 39 çулсенче Гитлер шайкки немĕç халăхне хирĕç юнлă вăрçăсем туса пычĕ; 1937—39 çулсенче вăл Испанире, Австрире тата Чехословакире тĕрлĕ авантюрăсем турĕ, 1939 çулта пĕтĕм тĕнчипе пуçпулса тăрассишĕн çĕнĕ вăрçă пуçласа ячĕ. Вăрçа, урăхла каласан, мĕнпур нацисен чи лайăх пайне пĕрмай пĕтерсе пырассине, Гитлер ялан кирлĕ япала, тесе шутлать. «Пурнăç вăл — вăрçă»,—тесе пĕлтерет çав çынçиен.—«Вăрçă вăл этемĕн кулленхи пурнăçĕ пулса тăрать».

Хальхи вăрçăра фашизм — халăхсен çак тискер те усал тăшманĕ мĕнле тĕллевсем лартать-ха? Геббельсăн «большевизма хирĕç тăвакан çĕрслĕ поход» тата «Европăри çĕнĕ йĕркене» çинчен шухăшласа кăларнă ухмахла япаласемпе тĕнчене культăракан суя суйăхшăвĕ хыçĕнче мĕн пытанса тăрать? Гитлерăн «Манăн кĕрешӳ» ятлă кĕнекинче каланă тăрăх, пĕтĕм тĕнчипех пуçпулса «халăх — чура; сахал çынсем кăна господасем пулма тивĕçлĕ»; «массăн пухăвĕнче шухăшсене валли вырăн çук, акă мĕншĕн ĕнтĕ çавăн пек атмосферăра манăн сăмахсем çавтери ăнăçлă пулаççĕ»; «масса вăл хăйĕн инстинкчĕсем хыççăн пыракан выльăх евĕрлĕ, вăл логикăна та, ăс-тăна та шута илмест».

Халăхсен чуралăхне Гитлер вĕсен пурнăçĕн тивĕçлĕ условийĕ тесе шутлать. Халăхсем хăйсене валли ирĕклĕх çапăçса илсе никама пăхăнми пулнă çĕрте, Гитлер шучĕпе, вĕсем «виçеллĕ» чуралла пурнăçран пăрăннă; фашизмăн алла хĕç тытса, çав халăхсене каллех чуралăха кĕме «пулăшмалла».

Тĕнчери пур халăхсен те, пуринчен малтан славян халăхĕсен, вĕсен чи хаяр, хăрушла тискер, тăшманĕ—Гитлер хăйсем çинчен мĕн каланине пĕлсе тăрас пулать. Çакна пĕлсе тăни çав çынçиене хирĕç кĕрешме — çĕр çинчен унăн юнлă господствин йĕрĕсене пĕтеричченех кĕрешме татăклă çĕнĕ вăй-хăват парĕ.

Акă мĕн калать çынçиен Гитлер:

«Эпир хамăрăн аслă Германи империне тăвас тетпĕр пулсан, пирĕн чăн Малтан славян халăхĕсене — вырăссене, поляксене, чехсене, словаксене, болгарсене, украинецсене, белоруссене хĕссе кăларса тĕп тумалла. Çакна тумасăр тăма немĕнле сăлтавсем те çук. Бельгипе Моравипе Рейн бассейнне, Германирен хĕвелтухăç еннелле тăсăлакан территорие немĕçсем колони тăваççĕ, вăл территорисенчи халăха эпир Çĕпĕре куçарса яратпăр... Ку тĕллеве пурнăçа кĕртмешкĕн икĕ е виçĕ миллион немĕç вилĕмне хам çине илмешкĕн эпĕ пĕр секунда та иккĕленсе тăрас çук... Эпир хамăр ялан пуçпулса тăрассине çапла тума шутлатпăр: вăл сахалтан та пин çула тăсăлтăр... Пире тивĕçлĕ ĕç вăл — ытти халăхсене пăхăнтарасси. Германи халăхĕн тĕнчене господасен çĕнĕ класне палламалла».

Çынçиен Гитлер общество малашнехи вăхăтра мĕнле пуласси çинчен тата тепĕр çĕрте каланине илсе кăтартар:

«Пулас социальнăй стройра господасен класĕ тата вăтам классем пулаççĕ. Малалла, унта ялanхи тарçăсен пит те йышлă масси пулать. Унтан та аяларах пирĕн парăнтарнă ютçăрпыш çыннисен класĕ пулать, вĕсене эпир лăпкă кăмăлпах халхи вăхăтри чурасем тетпĕр.. Чăн та ĕнтĕ хĕвелтухăçĕнче эпир хамăр опытсем валли анлă хир тупатпăр».

Гитлер чура тунă халăхсене вĕсем чура пулни вĕсене кирлĕ, вĕсене усăллă тесе, пĕр намăса пĕлмесĕрех калама хăять. Халăхсен çĕрне, ĕç хатĕрĕсене туртса илсен, вĕсен государственноçĕпе культурине пĕтерсе лартсан, Гитлер малтан вунпăр миллионлă славян халăхĕпе ĕç выльăхĕ вырăнне усă курма тăрăшать, унтан майĕпе вĕсене пуçĕпех пĕтерсе хума шутлать.

Пирĕн халăхăн Гитлер каланă çак сăмахсене те пĕлсе тăмалла:

«Эпир юриех Европăра çĕнĕ çĕрсем çапăçса илес политика çине куçатпăр. Европăра çĕнĕ çĕрсем çапăçса илесси çинчен каласа чух эпир, паллах, чăн малтан Российăна тата ăна пăхăнса тăракан ун хĕрринчи государствăсене кăна асра тытма тултаратпăр».

Гитлер Çĕр çинчи халăхăн пысăк пайне вутпа тата хĕçпе чура туса пĕтерсе хума тăрăшать. Истори тата тепĕр хут шут те ĕнентерӳллĕ кăтартрĕ ĕнтĕ: власть патне пырса тăнă вăрăхурах хăйĕн «ĕçĕнче» çынна вĕлерекенĕн тата çаратаканăн меслечĕсемпе çеç усă курма пултарать. Çĕлен хăйĕн вилĕм кӳрекен усал наркăмăшĕпе уйăрлман пекех, Гитлер та мирлĕ ялсемпе хуласене çунтарса яма, халăхсене вĕлерсе пĕтерме, хӳтлĕхсĕр хĕрарăмсемпе ачасене вĕлерме, урăхла каласан, çынçиен пулма чарăнмасть, эпир ăна тĕппипех пĕтерсе хуриччен чарăнас çук та вăл.

Çынçиен — вăл тискер кайăк, çынсене пĕтерекен, этем сăнĕпе çӳрекен юнĕçен çăткăн хищник. Унăн этемле мар туртăмĕсем, пӳтсĕр те ирсĕр туйăмĕсем, хĕрарăмсемпе ачасене ним хĕрхенмесĕр вĕлерес шухăшĕсем, татти-сĕрех, пĕрмаях юн, юн, татах юн ыйтни — çаксем пĕтĕмпех тӳрĕ те таса кăмăллă çынсен чĕрисене калама çук пысăк йĕрĕнчĕклĕ туйăмпа тултараççĕ.

Хальхи вăхăтри этемлĕхĕн пит те пысăк пайĕ Гитлера — çав çынçиене, варвара, çынсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыракана хирĕç кĕрешме пĕрлешĕ.

Историн хаяр иронине пула, чи культурăллă халăхсенчен пĕрин элчелĕ, пысăккăн аталаннă промышленноçлă государствăсенчен пĕри çынçиен-варварсен аллине лекнĕ. Тискер кайăкла урса кайнă Гитлер йыттисем таттисĕр вăрçăсем туса пынипе, миллионшар çынсене вĕлернипе, хальхи вăхăтра этемĕн аслă вăйне — унăн техникине этеме хăйне хирĕçех çавăрса тăратрĕç, ăс-тăн орудине — ăс-тăна пĕтерме, прогресăн калама çук пысăк паллине — прогреса пĕтерме çавăрчĕç.

Этемлĕх хăйĕн историн татăклă кунĕсене пурăнса иртнерет. Пирĕн кунсенче çакăн пек ыйтăва татса панă: этемлĕх иртнĕ ĕмĕрсем ăшнелле, пиншер çул каялла, чуралăхпа ирсĕрлĕх ытамне ывтăнĕ-и, тĕттĕмлĕхе кĕрсе кайĕ-и, вунпăр миллион çынсем ĕç, выльăхĕ пек, «калаçакан оруди» пулса, немĕç ландскнехтсен харпăрлăхĕ пулса тăрса пĕтĕç-и, е цивилизацине прогресс вăйĕсем кучухнехи çынçиенсене çĕнтерсе илĕç, вĕсене çĕр пичĕ çинчен шăлса тасатĕç те, этемлĕх валли пулас телейлĕ пурнăçалла каймалли çутă çул уçса парĕç.

Çаван пек ĕнтĕ, çаван пек кăна тăрать çĕр çинчи халăхăн чи пысăк пайĕ умĕнчи ыйту.

Совет Союзĕнчи халăхсем немĕç фашисчĕсен орудисене хирĕç аслă отечественнăй вăрçăпа çĕкленсе тăнăранпа пĕр уйăх иртрĕ. Гитлер вырăссен вăрçăсем пăшăлса, çĕр çинче пуçпуçлса тăма тытăнсан пурнăçа кĕреççĕ»; «пур майсемпе те тĕнчене немĕçсем çавăрса илмелле тăвас пулать».

Çавтери аташуллă идея ăçтан пулса тухма пултарнă-ха? Халăхсемпе государствăсене пĕтерсе пыракан çынçиесен çак «философине» сĕткен паракан çĕлкуçĕ ăçта вăл?

Гитлер çапла ответ парать: ку вăл— германецсен раси «господасен раси» пулса ытти пур халăхсенчен те çӳлте тăнинче немĕш.

Çак хупахри политик француз халăхне ĕçлеме пултарайман тата «инлесе пыракан» халăх, тет, англичансене пур майсемпе те мăшкăллаласа тиркет, румынсене, болгарсене тата чехсене вăл обезьянăсемпе танлаштарать, поляксене вăлерсе пĕтерет, вырăс халăхне «низший раса» тесе шутлать, японн халăхне «пулса çитмен çынсем» тесе пĕлтерет т. ыт те. Гитлер халăхăн историйĕпе унăн тивĕçлĕхне хăйĕн наркăмăшлă сурчăкĕпе сурса вараламан пĕр халăх та çук вара.

Çавăн пек ĕнтĕ, çавăн пек кăна тăрать çĕр çинчи халăхăн чи пысăк пайĕ умĕнчи ыйту.

Совет Союзĕнчи халăхсем немĕç фашисчĕсен орудисене хирĕç аслă отечественнăй вăрçăпа çĕкленсе тăнăранпа пĕр уйăх иртрĕ. Гитлер вырăссен

КАМСЕМ ВĔСЕМ?

АДОЛЬФ ГИТЛЕР

Вăл — Германин «фюрерĕ» вырăнне çĕкленнĕ Австри унтерĕ — Наполеон евĕрлĕ пулса выляма юратать. Вăл юриех хăйĕн шуçĕ çинче «Наполеон паяркине» ӳстернĕ, çав çӳç паяркипе унăн, сынвĕлеренĕн лутра çамкийĕ çинче усăнса тăрать.

Ниçта вĕренсе пĕтереймен, пурнăçра вырăн тупайманскер, вăл Мюнхенри пивнойсенче телей шырама тытăннă, çавăнта вара хăйĕн пекех пӳтсĕр авантюристсемпе пĕрле национал-социалистсен партине туса хунă. 1923 çулта вăл ним тума пĕлмесĕр çапкаланса çӳрекен кайзерла черносотеннăй офицерсемпе пĕрле путч (пăлхав) туса влаçа çавăрса илме тăнă, анчах ку путч ăнăçсăр вĕçленнĕ, çавăн чух вара Гитлер тăранса пурăнмалăх, хăйĕн листовкисене пичетлемелĕх тата хĕçпăшал туянма укçа-тенкĕ ăстан илни палăрнă.

Гитлер тата унпа пĕрле пулнисем суд умне тухса тăрсан çакна палăртнă: вăл Баварири промышленниксен союзĕн директорĕнчен Аустран, Мюнхенри шултра промышленникран Мафферан, нумай банкирсемпе шултра помещиксенчен чылай укçа-тенкĕ илсе тăнă.

Ана хӳтлесе пулăшса тăракансем сутăн илнĕ хăйсен тарçине чăсрах ирĕке кăларма тăрăшнă, кун хыççăн вара «социализмпа» витĕнесси, пĕр тумлам социализм та çук «национал-социализмпа» хӳтленсе тăрасси пуçланса каять. Суялăхпа ултав, ĕççыннисен массисен асапĕсемпе усă курса спекуляци тăвасси, тискер кайăкла шовинизмпа пĕрлештернĕ ултавлă лозунгсем, вăрçăшăн пропаганда тăвасси — çавăн пек ĕнтĕ фашистла «вĕрентĕвĕн» чăн-чăн тупсăмĕ.

Фашистсем влаçа хăйсен аллине ярса илнĕ хыççăн Гитлер умне хăйĕн суя сăмахĕсен пĕр пайне те пулин пурнăçа кĕртес ыйту тухса тăрсан, вăл хăйĕн штурмовой отрячĕсене ертсе пыракансенех вĕлерсе тăкать. Гитлерпа Геринг 1934 çулта июнĕн 30-мĕшĕнче туса ирттернĕ юнлă мунча — фашистла диктатурăн иккĕмĕш тапхăрĕ пулса тăрать. Пĕрремĕш тапхăрĕ — Германи рейхстагне вут тĕртсе çунтарнипе пăллă пулнă.

Унăн суя сăмахĕсем хыççăн кайнă вак буржуази массисене улталаса, Гитлер хăйĕн тулашри политикин тĕп принципĕсенче çавтери намăса пĕлмесĕр улшăнусем тăвать. Франци умĕнче вăл Эльзас-Лотаринги ыйтăвĕ пирки унăн ниепле претензисем те çук, ку ыйту ĕмĕрлĕхех татăлнă, тесе мисе хут каланă пуль. Халь çав провинцисене çĕнĕрен аннексиленĕ (çавăрса илнĕ); вăл вырăнсенчи французсене вутпа та, хĕçпе те пĕтерет, нимĕр тăрса юлнă халăха е концентрацилле лагерьсене яраççĕ, е Францин оккупацилемĕн вырăнĕсене куçараççĕ. Вăл Чехо-Словакие, Бельгие, Голландие тата халь фашистсен атти айне лекнĕ ытти çĕршывсене каланă сăмахсем те çавăнпалах тискерле ултавлă пулса тăнă.

Пĕр енчен кăна Гитлер хăй сăмахне çирĕп тытать: вăл Германири шултра капиталистсемшĕн, хăйне лайăх тӳлесе тăракан хуçасемшĕн тĕрĕс ĕçлет. Нумаях та пулмасть никама пĕлмен çапкаланчăк пулнăскер, хальхи «фюрер», нумай йышлă поместисемпе пурлăхăн хуçи пулса тăрать, анчах кĕтмен çĕртен тем пуласран хăй пурлăхне урăх çынсем урлă ютçĕршывсенчи банксенче тытса усрать.

ГЕРМАН ГЕРИНГ

Ку — темĕн чухлĕ орден çакса тултарнă тĕреклĕ сысна евĕрлĕ кĕлетке. Эхер те пурнăç урăхларах пулнă пулсан, вăл е циркра камит кăтартакан, е ярмаркăсенче кĕрешсе çӳрекен бесп пулмалла мĕн. Халĕ вăл — Гитлерăн сылтăм алли, фашистла вăрă-хурахсен шайкинче иккĕмĕш çын, фашистла Германин рейхсмаршалĕ, Пруссин министр-президенчĕ, Германи рейхстагĕн председателĕ тата ыт. те.

Гитлерăн пĕтĕм банди пекех, Герингăн биографийĕ питĕ вараланчăк, унта тĕп вырăнсенчен пĕрине ухмаха ернисен çурчĕ йышăнса тăрать. Ĕç ака мĕнпе: Геринг пьяница пулнинчен ытларах морфинист пулса тăрать. Морфинизм ăна ухмаха ернĕ этемсене тăхăнтартса лаплантармалли кĕпе патне илсе пынă.

Çакăн пек официальнăй документ пур — суд эксперчĕ, Карл Лундберг врач 1926 çулти апрелĕн 22-мĕшĕнче диагноз лартса заключени панă: «Геринг йывăр формăллă морфинизмпа чирлет», — тенĕ. Ку заключени Швецире пăхса тухнă суд ĕçĕнче пур. Судăн çакăн пек ыйтăва татса памалла пулнă: Геринг хăйĕн тăван мар ывăлĕн, Томасăн, опекунĕ пулма пултарать-и, çук-и? (Геринг Швеци службин капитанĕн Кантцован уйăрса янă арăмне качча илнĕ). Суд Геринга опекун пулма тивĕç паман.

Халь ĕнтĕ çак садист тата морфинист, рейхстага вут тивретсе çунтарас ĕçĕн тĕп организаторĕ, фашистсем чура тунă Германи халăхĕн «опекунĕ» пулса тăрать. Уçă хулана сывлăштран бомбăсем пăрахса аркатмалли калама çук хăрушă плансене вăл тунă.

Геринг — чи шултра капиталистсенчен пĕри, вăл хăйĕн ячĕпе тăракан концерна кĕрекен нумай фирмăсенче акцисем тытать. Вăл юри лартнă хăйĕн тăванĕ Бессерт урлă ĕçлет, лешĕ çар ведомстви валли калама çук пысăк подрядсем илсе туса парать. Геринг шăлнĕ Германири вăтăр акционерлă обществăсен правленисенче тăрать.

ИОСИФ ГЕББЕЛЬС

Çак хайăхăнни пек сăнлипитлĕ, çӳхе туталлă нĕрсĕр харлик çинне пăхăрлса. Вăл хытă хутран тунă фигляр евĕрлĕ, ун пек япала ачасене култарнинчен ытларах — хăратать. Анчах çак кайăк пуçĕнче çавтери нумай ирсĕрлĕхпе пӳтсĕрлĕх вырнаçнă, çавăнпа вăл Гитлер шайкин пропаганда министрĕ пулса тăрать.

Геббельс хăйĕн карьерине Рейн облаçĕнче тухса тăракан католикла листоксенче ханжалла, турăран хăрама вĕрентекен статьясем сырнипе пуçланă. Анчах ку тавар халăх хушшинче ăнăçлăн сарăлман. Вара Геббельс антисемитла паллă погромщикăн Штрассерăн, национал-социалистла печĕк журнал редакторĕн пулăшаканĕ пулса тăнă. 1927 çултан пуçласа Геббельс, Германири реакциллĕ капиталистсем хулăмăн сĕрсе панă бутербродсене тутанса пăхнăскер, эрнере пĕрре тухакан «Ангриф» ятлă журналăн хуçи тата редакторĕ пулса тăрать. Çак журнал, кайран хаçат пулса тăнăскер, «Фелькишер беобахтер» тенĕ тепĕр фашистла хаçатпа шăршлă, этеме курăйман пропаганда сарас, вăрçăшăн, халăхсене чура тăвассишĕн чаруçăр пропаганда тăвас тĕлĕшпе ăмăртать.

Геббельс—чексен хулăм кĕнекин хуçи, вăл кĕнекене ăна Крушшăн тата Германири ытти çар концернĕсемшĕн лайăх ĕçленĕшĕн наградăласа панă. Хăйĕн тăванĕсем урлă вăл пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă шучĕпе пуянкан Германири 15—20 чи шултра фирмăсен тупăшĕн пайĕсене илсе тăрать.

Геббельс пит хытă тăрăшать. Германи фашисчĕсене хăйсен черетлĕ агрессине, хăйсен фашистла ултавлă ĕçĕсене çирĕплетме кирлĕ пулсан вĕсем кашнинчех «палартакан» нумай «документсен» авторĕ Геббельс пулса тăрать тесе чăн-чăн сăлтавпах калаçсă. Геббельса пĕрре кăна мар ĕнтĕ вăрă-хурахла ĕç тунă çĕрте тытнă, вăл хăех хатĕрленĕ документсем çинче никĕсленсе тăракан провокацисене пĕрре кăна мар тăрă шыв çине кăларнă. Анчах та фашистла пропагандăн уйрăмлăхĕ çавă ĕнтĕ: вăл намăса пĕртте пĕлмест, ăна шĕр ирсĕр ĕç тунине палартсан, вăл вунă хут ытларах вăй хурса, тепĕр ирсĕр ĕçе тытăнать.

АЛЬФРЕД РОЗЕНБЕРГ

Фашистсен усал шăршлă зверинецĕнче çахнашкал гибрид та пур: вăл балтийски-вырăс белогвардеецĕпе «таса юнлă гитлеровеца» хутăштарса тунăскер. Ку — Альфред Розенберг, пĕтĕм тĕнчери мăнсул çинчи вăрă-хурахсен идеологĕсенчен пĕри.

Розенберган пурнăçĕ — пĕтĕмĕшпех вараланчăк, пӳтсĕр пурнăç. Вăл Ревельре çуралнă, тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче Мускавра политехнически институтра вĕреннĕ, çав вăхăтрах те Франци, те Германи штабĕн разведчикĕ пулса Франце кайса килме пултарнă. Вăл шыçмак, кӳпшек кĕлеткеллĕ—Шпрее набережнăйĕсенче намăсла ӳкерчĕксемпе суту-илӳ тăвакан тата хĕрарăм ӳчĕпе сутă тăвакан çуртсем валли «чĕрĕ тавар» тăратакан «благороднăй» этемсен ăраттинче хисепленекен тискер кайăк.

1919 çулта Розенберг Гитлерпа туслашнă.

Çавăнтан вара вăл хăйĕн профессине улăштарать, национал-социалистла партин «философĕ» пулса тăрать. Унăн тĕп специальноçĕ — советсене хирĕç хĕреслĕ поход тăвассишĕн кăшкăрасси.

Розенберган «Миф XX столетия» ятлă кĕнеки — хăйĕн ухмахлăхне пирĕн халăха тата пирĕн çĕршыва тискер кайăкла курайманнипе хутăштарни.

«Фелькишер беобахтер» хаçатра çавăн пек сырнисĕр тата начар кĕнекесем кăларнисĕр пуçне, Розенберг Германи фашизмĕн кĕрен çуртĕнче пĕтĕм тĕнчери питĕ те хытканлăчăк сводня (сынсене намăс ĕç тума пухакан ĕçчĕ) рольне вылять. Гитлер патне вăл кайри алăкпа хăйĕн чи сывăх тусне — ĕçсе супнă пьяницăна Скоропадскине тата çавăн пекех тĕрлĕ çĕршывсенчи реакционерсен сĕтелĕ çинчи апат юлашкийĕсемпе тăранса пурăнакан ирсĕр субъектсене иле-иле пынă.

Çакăн пек ĕнтĕ вăл, нумай асап тӳсекен Германи халăхĕн ӳчĕ çинчи шăршлă кĕсен-çăпан.

Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнни — Розенберган тахçанхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртни, унăн ылттăн тĕлĕкĕ. Анчах çак тĕлĕке журнă çĕртен Альфредпа унăн пур тăванĕсен те питĕ хăрушшăн вăрăнмалла пулать.

ГЕНРИХ ГИММЛЕР

Ана патша жандармĕн тумтирне тăхăнтарăр та, вара сирĕн чăн-чăн ротмистр-охранник, революционерсене асаплантарса, йĕрĕнчĕклĕн кулкаласа допроссем тунă этем пекки пулса тăрĕ.

«Йĕпе ĕç» рыцарĕ, Гестапо пуçлăхĕ, Генрих Гиммлер обер-палач, Германи халăхне пăвакан пуличчен самаях пуян пурнăç çулĕ тăрăх утса тухнă.

Пит те «хитре» биографи! Растратăсем, улталăк ĕçсем, мошенничество. суя свидетель пулни — çаксем студент тенкелĕ çинче ларнă вăхăтранах тăсăлаççĕ. Емĕр-ĕмĕр уголовнăй кодекспа килĕштермесĕр пурăннă.

Гиммлер — штурмовой тата охраннăй отрядсен, Гитлерăн личнăй гвардин чăн малтанхи организаторĕсенчен пĕри пулнă.

Ана çакăн пек задача панă: 1934 çулти июнĕн 30-мĕшĕнче Рема тата ытти шанчăксăр пиншер фашистсене пĕтерсе, юнлă Адольфăн аллисене салтса ямалла пулнă. Мăй таранах юн ăшне кĕрсе тăрса, Гиммлер çак ĕçе тĕп-тĕрĕс тунă.

Унăннах тата тепĕр «чаплă ĕç» пур. Вăл — ютçĕршывсенче пурăнакан антифашистсене вăрласа тухса вĕлересси. Гиммлер йĕкĕчĕсем Швейцарин, Бельгин, Чехо-Словакин чикĕ хĕрринчи районĕсене кĕрсе кайса çынсене яра-яра тытнă та, е вырăнтах вĕлернĕ, е хăйсемпе пĕрле Германие илсе кайнă. Çавăн пек пыра-пыра кĕни пĕтĕм тĕнчери правăна калама çук пысăкскăй пăсни пулать, анчах вăл нимĕн те мар. Гитлеровецсемшĕн закон çырман, вĕсемшĕн ниепле моральпе чыслăх правилисем те çук. Гиммлер законĕ вăл — Маобит тĕрминчи пуç касакан пуртă, кĕтес хыççăнчен тĕллесе пенĕ пуля, ним намăса пĕлмесĕр вăрă-хурахла çаратни. Çак пур тискерлĕхпе тӳсме çук ирсĕрлĕхĕн тĕп вырăнĕ — Гестапо пулса тăрать, унта çĕршыв ăшĕнче хаяр террорпа унăн тулашĕнчи пĕтĕм тĕнчипе пыракан шпионаж тата диверсисем пĕтĕсĕ тăраççĕ.

РОБЕРТ ЛЕЙ

Хура япалана шурă тесе, хаяр кашкăра айăпсăр «Хĕрлĕ çĕлĕк» тесе ĕнентересси, рабочи класăн чи усал та хаяр тăшманĕсене — унăн тусĕсемпе унпăн тăрăшакансем тесе каласси—çакăн пек ĕçе Роберт Лей пек намăссăр ултавçăсем, суя ăстисем çеç тума пултараççĕ. Вăл фашистсен «ĕç фрончĕн» пуçлăхĕ пулса тăрать.

Вăрçă хыççăн малтанхи çулсенче унăн ĕçĕ Кельн хулинче пулса пынă. Кунта вăл «Вестдейчер беобахтер» ятлă порнографиллĕ антисемитла листока редакциленĕ. Кунта вăл çав вăхăтра тунă ирсĕрлĕхсемпе преступленисем çинчен паян кунччăнех калаçаççĕ.

Лея халăх умĕнче те, сăмахпа та, пичет урлă та мĕншĕн кăна айăпламан пулĕ!

Темле майпа ун аллине лекнĕ тăлăх арăмсемпе тăлăх ачасен перекетленĕ укçине салатса янăшăн айăпланă ăна. Кун пирки Лея Кельн хула думин гласнăйĕ Майнц айăпласа каланă.

Ашкăнăшăн, ӳсĕрпе çапăçса пĕтнĕшĕн айăпланă. Кун пеккисем çинчен пĕрре кăна мар пĕлтернĕ: пĕрре çав Лей пĕлми ӳсĕр пулса Кельн хулин полицейпрезиденчĕн пуçне шампански бутылкипе çапса ватнă, тепринче выранти ратушăра искусствăн хаклă произведенийĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ т. ыт. те.

Асамат кĕперĕнче çичĕ тĕс пĕрлешсе курăнса тăнă пекех, çав Лей тенĕ этемре те фашистла каннибалсемпе варварсен шур çылăхĕсемпе ирсĕрлĕхĕсем пĕрлешсе тăраççĕ.

(«Огонек» журналран).

Чехословакире Германие хирĕç тăвакан саботажсем

Англири «Ивнинг стандарт» хаçат Чехословаки республикин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн Ян Массарикăн статьине пичетлесе кăларнă.

Массарик чехсем Германи оккупанчĕсене хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен çырать. Европăра вăрçă пуçланнă хыççăн тепĕр икĕ уйăхран,—тесе çырать Массарик, — Прага хулинчи университетри студентсем Германие хирĕçлесе вăйлă демонстраци туса ирттернĕ. Германин урса кайнă фашисчĕсем 120 çынна персе вĕлернĕ, тĕрмесемпе концентрацилле лагерьсене 6 мин çынна хупса лартнă, унта вĕсене çавтери тискеррĕн асаплантараççĕ.

Хальхи вăхăтра çавăн пек уçă методсемпе кĕрешме питех те йывăр. Пирĕн халăх никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн нумай çулсем хушши кĕрешнĕ опыт, — чехсем çак кĕрешĕве 1500 çул ытла туса пыраççĕ, — пире урăх методсене суйласа илме май парать, вăл методсем те çителĕклĕ таранах усă кӳрекенскерсем пулмалла. Сăмах вăрттăн кĕрешесси çинчен пырать, çав вăрттăн кĕрешӳ иртнĕ вăрçăра пире нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтăлма пулăшрĕ.

Чехире çынсем пит сахал калаçаççĕ, вĕсем пуринчен ытларах итлеççĕ тата сăнаççĕ. Çаван пек сăнанине пула пире, Лондонра пурăнакансене, Германири тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенчи экономика çинчен, Англи блокади витĕмлĕ пулни çинчен хаклă фактсене пухма май пачĕ.

Çав мĕнпур фактсене тĕплĕн вĕренни гитлерла режимăн начар енĕсене палăртма май пачĕ. Ун пек начар енсем сахал мар. Гитлер пуринчен ытла саботаж тăвассинчен, уйрăмăнах оккупациленĕ территорире саботаж тăвассинчен хытă хăрать. Нимĕçсем саботаж тунине хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ, мĕншĕн тесен вăл вĕсен çар машинисене йĕркеллĕ ĕçлеме чăрмантарать. Саботаж тăвасси промышленносра, суту-илӳре, ялхуçалăхĕнче кунран-кунах пулса пырать. Сăмахран, Шкода завочĕсем продукци кăларассине ниепле те малтанхи вĕсене çитереймеççĕ. Саботаж тăвасси тĕрлĕ формăпа пулса пырать, нимĕçсем вĕсене хирĕç вирлĕн кĕрешме те пултараймаççĕ. Нумаях пулмасть Прагăри авиаци заводĕнчи — «Авиа» ятлă пысăк заводра темиçе пин рабочи забастовка тунă çинчен калакан сведенисене илнĕ. Нимĕçсем 35 забастовщика тĕрмене хупмалла тунă. Анчах ун пек приговорсем нимĕçсене хăйсенех пысăк сиен кӳреççĕ, мĕншĕн тесен квалификацилле рабочисем çуккипе продукци кăларасси хыттăн чакса пырать. Рабочисем брак тăваççĕ, хăш чухне нимĕçсем ăна асăрхама та пултараймаççĕ. Чех хресченĕсем продовольстви тăратасси çинчен оккупантсем кăлараканпринказсене пурăнса кĕртмеççĕ. Хресченсене палăртнă хисеппе тырпул пухма хушнă пулнă, анчах вĕсем çав хисеппи виççĕмĕш пайĕнчен пĕр пайне çеç пухнă. Хресченсене вылăхсем пуснă çĕре палăртнă хисеппе вылăхсем илсе пыма хушнă. Анчах, пуснă вылăхсене склада илсе пырсан, вĕсенчен нумайĕшне вăрттăн майпа вăрласа пĕтернĕ.

Çиелтен пăхсан çаксем пысăк мар фактсем темелле. Анчах та вăл фактсем «протекторатра» нимĕçсене гестапо полицейскийĕсен пысăк çарне тытса тăма хушать.

Июлĕн 21-мĕш. (ТАСС).

Италире нимĕçсем хăйсене хуçа пек тыткалаççĕ

Аргентинăри «Пренса» хаçат Италире нимĕçсем хăйсене хуçа пек тыткалани тата Италипе Германи фашизмĕ хушшинчи хирĕçӳсем çинчен çырать. Де Русси отель хальхи вăхăтра Германин Римри командованийĕн вырăнĕ шутланать. Германи командованин чинĕсемпе ытти çынсен автомобилĕсем Пополо площадĕнче тăраççĕ, мотоциклсем вара Пинчо сачĕсенче. Итальянецсем çакăн пирки питех те тĕлĕнеççĕ: гостиницăсене хĕнĕ çĕрте яланах Германин çар формипе тумланнă генералсемпе офицерсене курма пулать. Çав çӳлте асăннă садран тухакан кăтартусене тӳрех Италин çар, тинĕс тата авиаци министерствисене тата хальхи вăхăтра Итали территорине оккупацилекен Германи соединенийĕсене яраççĕ. Муссолини çав-çавах Венеция дворецĕнче ларать, анчах вăл дворец пĕтĕмĕшпех нимĕçсен контролĕнче, Муссолини нацистсем пулăшнипе çеç влаçра тăрать.

Ытти министерствăсенчи пекех, ютçĕршыв ĕçĕсен министерствинче те нимĕçсем пит лайăх вырăн тупнă. Германи чиновникĕсем, комиссарсен функцийĕсене туса тăраканскерсем, ирĕх памасăр çав министерствăсем нимĕнле решени те йышăнма пултараймаççĕ. Нимĕçсем, уйрăмăнах Риббентроп, Чиано çине пит сиввĕн пăхаççĕ. Пĕррехинче Чиано Гитлера хирĕç пулнă, лешĕ вара ăна: «Эсир ашак-и е ашак ывăлĕ-и!», тесе кăшкăрса тăкнă.

Бадольо тата Итали верховнăй командованийĕн ытти чылай членĕсем отставкăна тухни, милици начальникĕ тата фашистла партин малтанхи секретарьне Старачене вырăнтан кăларни, фашистла парти секретарьне Мутине вырăнтан кăларни,—çаксем ĕнтĕ фашистла руководствăра Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйлине кăтартса параççĕ. (ТАСС).

Варшава нимĕçсен аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Лондонра илнĕ сведенисем тăрăх, Варшава Германин аманнă салтакĕсемпе тата офицерĕсемпе тулса ларнă. Госпитальсенче лушă вырăн пĕрре те çук. Фронтран пырса çитнĕ аманнă салтаксемпе офицерсене шкулсемпе общественăллă çуртсене вырнаçтараççĕ. Анчах аманнисене çине-çинех çавтери йышлăн илсе пыраççĕ, вĕсене ниçта вырнаçтарма май çук пирки Германи влаçĕсем уйрăм çынсен çурчĕсене туртса илме тытăннă.

Рузвельт конгреса чĕнсе калани

ВАШИНГТОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рузвельт конгреса чĕнсе каланă. Пĕр çулăха çара илнĕ çынсен служба срокне паллă мар вăхăта тăсма сĕннĕ. Хăйĕн чĕнĕвĕнче Рузвельт: США-на хăратса тăракан хăрушлăх пăхăтра иртнĕ çултинчен, конгресс çар службинче пĕр çул пурăнмалла туса йышăннă чухнехинчен, темиçе хут пысăкрах, тесе пĕлтернĕ.

Уэллес пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çапла пĕлтерĕ: Европăри юлашки никама пăхăнмасăр пурăнакан çĕршывсене хирĕç Германия çĕнĕ агресси тума хатĕрленни çинчен США информаци илнĕ. Уэллес çак ыйту пирки нимĕн те ăнлантарса паман, анчах агентство çапла пĕлтерет: хăшпĕр çынсен шухăшĕпе Германия Испанипе Португали тĕлĕпе агресси тума хатĕрленет.

Словаки халăхĕ гитлерла оккупантсене хирĕç тăрать

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Словакин национальнăй оборона министрĕ генерал Чатлош Словаки халăхне чĕнсе каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл: Словакири тырпулсене чи малтанах Германи салтакĕсем валли сыхласа усрамалла, тесе каланă.

«Словак» хаçат çырнă тăрăх, пĕр ирне хушшинче Словакире хĕçпăшалăне туртса илсе 587 çынна арестленĕ. Çав çынсенчен нумайĕшне концентрацилле лагерьсене ăсатнă. Çакă вăл Россипăна хирĕç вăрçă пуçланă хыççăн Словакире иккĕмĕш хут туса иртернĕ арестсем пулса тăраççĕ. Россипăна хирĕç вăрçă пуçланă хыççăнах 1000 ытла çынна арестленĕ. Арестсен иккĕмĕш хумĕ Словаки халăхĕ «хăйĕн правительстви майлă» тăнине кăтартса парать, урăхла каласан, алла хĕçпăшал илсе правительствăна хыçалтан тĕллесе тăрать.

Берлинри вăрă-хурахсен банди

Бор. Ефимов ӳкерчĕкĕ.

Гитлер Геринг Гиммлер Лей Розенберг Геббельс

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2554

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345, ф. 6 58/84 п. л.